чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

ШĂМАТ КУН
2014, кăрлач /январь/
25

13-14 /26419-26420/ № №

Хакĕ ирĕклĕ

WWW.hypar.ru

## Хаклă туссем!

**Сире Раççей студенчĕсен кунĕ ячĕпе чунран саламлатăп!**

Студент çулĕсем – пурнăçăн çутă та илĕртӳллĕ тапхăрĕ, ку вăхăтра кирек камăн та вăй вĕресе тăрать, чунра çĕкленӳллĕ ĕмĕт-туйăм хуçаланать, пуçра пысăк плансем çуралаççĕ, тĕнчене улăштарса ăна ырăрах тăвас килет. Влаç органĕсен тĕллевĕ – сире хăвăрăн пархатарлă çав ĕмĕтĕрсене пурнăçлама, пултарулăхăра туллин уçма, çынлăх тата професси пахалăхĕсене тивĕçлĕн ăша хывма майсем туса парасси. Чăваш Республикин тата Раççей Федерацийĕн пуласлăхĕ шăпах сирĕнтен килет вĕт.

Чăваш Ен Правительстви професси вĕренĕвĕн тытăмне лайăхлатасси çине питĕ тимлĕ пăхать, асăннă тытăмăн тĕллевĕ вара тивĕçлĕ пĕлӳ парса, кирлĕ пек ăсталăхпа хăнăхăва алла илме пулăшса ĕç рынокĕнче ăнăçлă тупăшма пултаракан конкурентлă специалистсене вĕрентсе хатĕрлесси пулса тăрать.

Университетсемпе институтсен, техникумсемпе колледжсен тата училищĕсен пурлăхпа техника никĕсĕ çирĕпленет, педагогика кадрĕсен ăсталăхĕ тăтăшах ӳссе пырать. Професси пĕлĕвĕ паракан учрежденисемпе республикăри малта пыракан предприятисем çыхăнса ĕçлесси вăйланать. Пĕлтĕр Шупашкарти транспорт тата строительство технологийĕсен техникумĕн никĕсĕ çинче хушма квалификацисен нумай функциллĕ центрне уçнă, планра – çавнашкал тата 6 центр уçасси, çав шутра «Раççей сечĕсем» акционерсен уçă обществи, «ТехноНиколь» корпораци, Г.А.Ильенко ячĕллĕ «Элара» НПК акционерсен уçă обществи пек компанисене хутшăнтарса.

Чăваш Енĕн талантлă çамрăкĕсем валли пултарулăхри ăнтăлушăн стипендисем, çамрăксен патшалăх премийĕсене çирĕплетнĕ. Патшалăхăн пĕрлехи экзаменĕсене тытнă чухне физикăпа тата математикăпа лайăх результатсем кăтартнă, каярах инженер профессине суйласа илнĕ çамрăксем валли те хушма стипендисем палăртнă.

Эсир обществăра тивĕçлĕ вырăн йышăнасса, пултарулăхăрпа туллин усă курасса тата юратупа çунатланса çирĕп çемье чăмăртасса шанса тăратăп. Сире çирĕп сывлăх, иксĕлми шанăç, хастар кăмăл, мĕн пур ырă пуçарăва пурнăçлас ĕçре çитĕнӳсем, телей тата ырлăх сунатăп!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**

*Пулăм*

# «Ялав чыса, паттăрлăха сăнарлать»



*РФ федерацин наркотиксен çаврăнăшне тĕрĕслесе тăракан службин /вырăсла – ФСКН/ Чăваш Республикинчи управленине кăрлач уйăхĕн 23-мĕшĕнче савăнăçлă лару-тăрура ялав пачĕç. Çак мероприятие Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, Патшалăхăн наркотиксемпе кĕрешекен комитечĕн аппарачĕн ертӳçин çумĕ – федерацин Атăлçи округĕнчи управленин пуçлăхĕ, полици генерал-майорĕ Сергей Васильев, сумлă ытти хăна хутшăнчĕç.*

Раççей Президенчĕн 2011 çулхи кăрлач уйăхĕн 2-мĕшĕнчи "Раççей Федерацийĕн федерацин наркотиксен çаврăнăшне тĕрĕслесе тăракан службин ялавне тата унăн территорири органĕсемпе вĕренӳ учрежденийĕсен ялавĕсене туса хурасси çинчен" 20 №-лĕ указĕпе килĕшӳллĕн ялава ФСКНăн территорири органĕсене савăнăçлă лару-тăрура параççĕ. Вăл – ведомствăн официаллă символĕ тата реликвийĕ, Тăван çĕр-шыва чĕререн парăнса ĕçленине, тивĕçе чыслăн пурнăçланине палăртать.

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев çак мероприяти ФСКНăн Чăваш Республикинчи управленийĕн ĕçне тивĕçлипе хак пани терĕ. Ведомство çамрăк пулин те кăткăс та яваплă тĕллевсене – республикăри çынсен сывлăхне сыхласси тата вĕсене хăрушсăрлăхпа тивĕçтересси – ăнăçлă пурнăçласа пынине палăртрĕ. Право йĕркине сыхлакан, ĕç тăвакан влаç тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçленине пула республикăри наркоманипе çыхăннă лару-тăрăва тивĕçлĕ шайра тĕрĕслесе тăма май килнине каларĕ. "Пурте пĕрле тăрăшсан эпир наркотиксен çаврăнăшĕн сферинчи преступленисемпе малашне те ăнăçлăн кĕрешессе, хамăрăн гражданcене çак усалран шанчăклăн хӳтĕлессе шанатăп", – терĕ Михаил Васильевич. "Паян сирĕн управленишĕн нумайлăха асра юлмалли кун. Ялав мĕн авалтанпах чыса, паттăрлăха тата мухтава сăнарлакан тĕп символ шутланнă. Управлени ялавĕ – пирĕн службăн официаллă символĕн пĕр пайĕ çеç мар, вăл – сăваплă япала. Паянхи пулăм управлени историйĕнче пĕлтерĕшлĕ тапхăр пулса юлĕ, вăл коллектива хăйĕн тĕллевĕсене ăнăçлăн пурнăçлама хистĕ", – терĕ Сергей Васильев.

Унтан Сергей Андреевич, полицин отставкăри генерал-майорĕ Виктор Сивцов тата управленин чи лайăх ĕçченĕсем ялава аври çумне çирĕплетрĕç. Сергей Васильев Раççей Президенчĕн Владимир Путинăн Хисеп хутне вуласа пачĕ, унта ФСКНăн Чăваш Республикинчи управленине ялав панине палăртнă. "Эпир ялава лайăх упрама тата хамăрăн ĕçе хисепленин символĕ вырăнне хурса сума сумашкăн шантаратпăр", – терĕ Евгений Барсуков. Çак ялав управленире упранĕ, вăл пĕлтерĕшлĕ кашни мероприятин уйрăлми пайĕ пулса тăрĕ.

Журналистсен ыйтăвĕсене хуравланă май Сергей Васильев Чăваш Республикинчи Наркотиксемпе кĕрешекен комисси федерацин Атăлçи округĕнче чи лайăххисенчен пĕри тесе палăртрĕ. ФСКН управленийĕ вара 2013 çулхи ĕç кăтартăвĕсемпе округра 2-мĕш вырăн йышăннă.

Çав кунах Раççей ФСКНĕн Чăваш Республикинчи управленийĕн коллегийĕн анлă ларăвĕ иртрĕ. Унта 2013 çулхи ĕç-хĕле пĕтĕмлетрĕç, 2014 çулăн пĕрремĕш çурри валли тĕллевсене палăртрĕç. Евгений Барсуков хăйĕн докладĕнче чылай цифрăпа паллаштарчĕ. Наркотиксен саккунсăр çаврăнăшĕпе çыхăннă преступленисене уçса памашкăн вăй структурисемпе, республикăн ĕç тăвакан влаç органĕсемпе килĕштерсе ĕçлени пулăшнине асăнчĕ. Наркоманипе кĕрешмелли саккунсене юлашки вăхăтра мĕнлерех улшăнусем кĕртнине, çакă наркополицейскисен ĕçне еплерех витĕм кӳнине каласа кăтартрĕ.

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев муниципалитетсенче наркоманипе çыхăннă лару-тăру ытла хăрушах маррине пĕлтерчĕ. "Шурă наркăмăшăн" дозине ытлашшипех ӳстернĕрен çын вилесси пĕлтĕр пĕр тĕслĕх те пулманнине каларĕ. Халăх наркотиксене сивлетĕр тесе малалла та çине тăрса ĕçлемелле терĕ. "Хальхи вăхăтра эпир ачасемпе çамрăксен спорт юхăмне аталантарма тăрăшатпăр. Спортпа тата физкультурăпа туслисен хушшинче хĕр-упраçпа яш-кĕрĕм шучĕ ӳссех пырать. Ку – сывă пурнăç йĕркине суйласа илмелли чи лайăх мел", – калаçăва тăсрĕ Михаил Васильевич.

Ларура управленин ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунă сотрудникĕсене наградăсем пачĕç.

**Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА**

# «Хыпара» – Тав хучӗ



*«Хыпар» хаҫат пухмачӗнче числав хучӗ чылай. Ҫак кунсенче вӗсен шучӗ татах ӳсрӗ.*

Раҫҫей Президенчӗн федераци Атӑлҫи округӗнчи полномочиллӗ представителӗн аппарачӗ чӑваш халӑх хаҫатне влаҫ тытӑмӗсемпе тачӑ ҫыхӑнса ӗҫленӗшӗн, пурнӑҫри пулӑмсене тӗрӗс ҫутатнӑшӑн, наци культурине аталантарма пысӑк тӳпе хывнӑшӑн Тав хучӗпе чысларӗ. Федерацин Чӑваш Республикинчи тӗп инспекторӗ Геннадий Федоров ӑна ирхи планеркӑра «Хыпар» хаҫатӑн директорнетӗп редакторне Алексей Леонтьева пачӗ, малашне те талпӑнуллӑ, халӑха ҫывӑх пулма, тухӑҫлӑ ӗҫлеме иксӗлми вӑй-хӑват сунчӗ.

«Коллектива Раҫҫей Президенчӗн Атӑлҫи округӗнчи полномочиллӗ представителӗ Михаил Бабич пуҫарнипе тата вӑл пулӑшнипе иртекен общество пӗлтерӗшлӗ проектсене пурнӑҫа кӗртме тата вӗсене тӗплӗ ҫутатма тӑрӑшнӑшӑн тав тӑватӑп», – тенӗ хаклӑ хутра.

**А.СТЕПНОВ**

# Тӑван хулана, уява



*Вӑхӑт чуппи тем пек хӑвӑрт пулсан та Тӑван ҫӗршывӑн паттӑрлӑх страницисенче яланлӑхах ҫырӑнса юлнӑ ҫав пулӑм ӑрусен асӗнчен нихӑҫан та тухмӗ. 900 талӑк тӑшман ункинче асапланнӑ Ленинград хулине Совет Ҫарӗ ирӗке кӑларнӑранпа кӑрлач уйӑхӗн 27-мӗшӗнче 70 ҫул ҫитет. Чӑваш Республикин те, унӑн мухтавлӑ ывӑлӗн-хӗрӗн те ҫак ҫӗнтерӳре хӑйӗн сумлӑ тӳпи пур. 1840 ентеше «Ленинграда хӳтӗленӗшӗн» медальпе чысланӑ, Ленинград тата Волхов фрончӗсенче ҫапӑҫнисем ытти наградӑна тивӗҫнӗ.*

1943 ҫулхи ҫулла Чӑваш Ене пине яхӑн ачана эвакуациленӗ. Вӗсен хушамачӗсем республикӑри истори патшалӑх архивӗнче упранаҫҫӗ. Чылайӑшӗн хушамачӗ тӗлӗнче «ашшӗ-амӑшӗ вилнӗ», «амӑшӗ вилнӗ, ашшӗ Хӗрлӗ ҫар ретӗнче», «сведени ҫук» тенӗ. Вӑрҫӑ хӑрушлӑхне тӳссе ирттернӗ ачасене республикӑри ача-пӑча интерначӗсене вырнаҫтарнӑ. Вӗсем валли Тӑвай районӗнчи Элпуҫӗнче, Шупашкар районӗнчи Кӳкеҫпе Ишекре, Сӗнтӗрпе Улатӑр районӗсенчи Карӑшлӑхпа Явлейре ача ҫурчӗсем васкавлӑ уҫнӑ.

Кӳкеҫри ача ҫурчӗ Ленинград фрончӗн ҫар ҫыннисемпе ҫыхӑну тытнӑ. Ленинград блокадине сирнӗ ятпа янӑ ачасен саламлӑ ҫырӑвне хуравласа Л.Говоров маршал икӗ машина парне ярса панӑ, Ленинград хулин паттӑрӗсем пек ҫирӗп кӑмӑллӑ, хӑюллӑ пулма суннӑ.

Хальхи вӑхӑтра пирӗн республикӑра «Ленинграда хӳтӗленӗшӗн» медальпе наградӑланӑ 31 тата «Блокадӑри Ленинградра пурӑнакана» паллӑ илнӗ 59 ҫын пурӑнать.

1996 ҫулта Шупашкарта тӗпленнӗ Лариса Сидоренко та 1943 ҫулхи ҫурла уйӑхӗн 28-мӗшӗнче блокадӑри Ленинградра ҫуралнӑ. Ашшӗ Ленинград фронтӗнче ҫапӑҫнӑ, амӑшӗ тӑшмана ҫапса аркатиччен ҫар госпиталӗнче медсестрара тӑрӑшнӑ.

Лариса Андреевна Ленинградри суту-илӳ техникумӗнче, финанспа экономика институтӗнче вӗреннӗ. Ҫемье ҫавӑрсан мӑшӑрӗпе Душанбере, Целиноградра, Байконуртра пурӑннӑ. Ывӑлпа хӗр ҫуратса ӳстернӗ. Унӑн та «Блокадӑри Ленинградра пурӑнакана» паллӑ пур.

Кӑҫалхи кӑрлачӑн 26-29-мӗшӗсенче Санкт-Петербургра Ленинград хулине нимӗҫ фашисчӗсен блокадинчен хӑтарнӑранпа 70 ҫул ҫитнине халалласа уяв мероприятийӗсем иртеҫҫӗ. Чӑваш Республикинчен унта хутшӑнакан делегаци йышӗнче Лариса Сидоренко та пур.

ЧР Сывлӑх сыхлавӗн министерствин ӗҫченӗсемпе тӑванӗсем ӗнер Лариса Андреевнӑна Шупашкарти чукун ҫул вокзалӗнчен тӑван хулинчи уява ӑшшӑн ӑсатрӗҫ.

**Юрий СТЕПАНОВ**

## Санкт-Петербургран – ҫитӗнӳпе

***Шупашкарти ача-пӑчан 1-мӗш ӳнер шкулӗнче вӗренекенсемшӗн ҫӗнӗ ҫул ҫитӗнӳрен пуҫланнӑ. Вӗсем Санкт-Петербургра иртнӗ Пӗтӗм тӗнче фестивалӗнчен дипломсемпе таврӑннӑ.***

«Пултаруллисен планети» пуҫарнӑ конкурса ЧР культурӑн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ Татьяна Григорьевӑн 15 вӗренекенӗ ҫитсе килнӗ. Унта ача-пӑча театрӗсем, ташӑ ушкӑнӗсем, ансамбльсем, вокалистсем, хористсем – пурӗ 1000 ытла ҫамрӑк – хутшӑннӑ, вӗсен пултарулӑхне профессорсемпе паллӑ артистсем хакланӑ.

Пирӗн ентешсем фестивальте чӑваш, вырӑс тата тутар халӑх юрри-кӗввине шӑрантарса тӗрлӗ номинацире палӑрнӑ. Хут купӑҫҫисен «Унисон» тата «Фортуна» ансамблӗсем II степень диплома тивӗҫнӗ. Никита Сорокин, Павел Парфенов, Никитӑпа Софья Кожевниковсем ҫамрӑк юрӑҫсем лауреатсен йышне кӗнӗ. Вӗсен вӗрентекенне Т.Григорьевӑна «Чи лайӑх преподаватель» ятпа числанӑ.

**Е.АНДРЕЕВ.**

## Саламлатпӑр

Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗн 2014 ҫулхи кӑрлач уйӑхӗн 23-мӗшӗнчи 6-мӗш указӗпе килӗшӳллӗн Чӑваш Республикин промышленноҫӗн аталанӑвне пысӑк тӳпе хывнӑшӑн Шупашкар хулинчи **"Лента" акционерсен уҫӑ обществине ЧӐВАШ РЕСПУБЛИКИН ХИСЕП ГРАМОТИПЕ** наградӑланӑ;

промышленноҫри тава тивӗҫлӗ ӗҫсемшӗн тата нумай ҫул тӳрӗ кӑмӑлпа вӑй хунӑшӑн Шупашкар хулинчи "Лента" акционерсен уҫӑ обществин пир тӗртекенне **Раиса Зиновьевна ВЛАДИМИРОВӐНА,** "Лента" акционерсен уҫӑ обществин Ҫӗнӗ Шупашкар хулинчи филиалӗн пир тӗртекен участокӗн пахалӑх тӗрӗслевҫине **Калиса Петровна КУЗНЕЦОВӐНА,** Шупашкар хулинчи "Лента" акционерсен уҫӑ обществин техника уйрӑмӗн пуҫлӑхне **Раиля Илдаровна САДУРОВӐНА "ЧӐВАШ РЕСПУБЛИКИН ПРОМЫШЛЕННОҪӐН ТАВА ТИВӖҪЛӖ ӖҪЧЕНӖ"** хисеплӗ ят панӑ.

*Канашлу*

# Ырри чылай. Ҫитменлӗх те сахал мар

***Ӗнер республика Пуҫлӑхӗ Михаил Игнатьев Ҫӗрпӳ хулинче пулчӗ. «Кӑнтӑр-2» микрорайонта федераципе республикӑн социаллӑ программисемпе килӗшӳллӗн пурӑнмалли ҫурт тӑвассине еплерех йӗркелениле паллашрӗ.***

Хулан кӑнтӑр енчи тӳремӗнче, М-7 автоҫул хӗррипе, ҫитес ҫулсенче нумай хваттерлӗ 10 ҫурт тата 16 коттедж туса пӗтерме палӑртнӑ. Строительство вӑй илсех пырать. Вӑтӑр хваттерлӗ пӗр ҫуртӑн кӑшкарне хӑпартнӑ, виҫҫӗшӗн никӗсне янӑ. Кунта нумай ачаллӑ ҫемьесене, тӑлӑхсене, патшалӑх ҫӑмӑллӑхӗпе усӑ куракан ытти категорие пурӑнмалли вырӑнпа тивӗҫтерӗҫ. Микрорайона газ, шыв ҫитернӗ.

М.Игнатьев объекта вӑхӑтра хута яма мӗн чӑрмантарассипе кӑсӑкланчӗ. «Микрорайона автотрассӑпа ҫыхӑнтаракан ҫула, тӑкӑрлӑксене ӗҫе кӗртесси пирки халех шухӑшламалла. Уйрӑммӑн илсен вӗсен проектне тума, ӑна килес ҫулсенче пурнӑҫлама хыснара укҫа уйӑрса хӑвармалла», – терӗ «ПМК-2» обществӑн генди-ректорӗ Виталий Ижелеев.

Республика Пуҫлӑхӗ Ҫӗрпӳри пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан, ятарлӑ /тӳрленме пулӑшакан/ 1-мӗш интернат шкула ҫитсе курчӗ. Спорт залӗнче волейболла вылякан ачасемпе калаҫрӗ, вӗренӳ класӗсене, апатланмӑша кӗрсе пӑхрӗ. Акт залӗнче вӗрентекенсемпе тата шкулта пӗлӳ илекенсемпе тӗл пулчӗ. Кунта 68 ача ӑс пухать. Патшалӑх вӗсене пурнӑҫ ҫулӗ ҫине тӑратассишӗн кӗмӗл шеллемест. 37 педагогпа техника ӗҫченӗ вӑй хурать. Интерната кӑҫал хыснаран 23 млн тенкӗ уйӑрма пӑхнӑ.

М.Игнатьев М-7 автоҫултан пӑрӑнсан район тӗп больници тӗлӗнчен иртсе каймарӗ – поликлиникӑна кӗчӗ. Регистратурӑра учреждение куллен миҫе пациент медпулӑшу ыйтма килнипе кӑсӑкланчӗ. «600 ытла», – хуравларӗҫ ӑна. Модернизаци программипе килӗшӳллӗн ҫӗнетнӗ рентген, маммографи уйрӑмӗсенчи хаклӑ оборудованисене тишкерчӗ. Коридорта Чиричкассинчи 75 ҫулти Калиса Софроновӑна, терапевт пӳлӗмӗ умӗнчи вӑрӑм сак ҫинче ларакан хӗрарӑмсене больницӑна мӗнле нуша хӑваласа килнине ыйтса пӗлчӗ. Кашни хутра врачсемпе, медсестрасемпе калаҫрӗ – поликлиника ӗҫне лайӑхрах ӑнланма тӑрӑшрӗ. Больницӑн тӗп врачӗ Ольга Ермакова Михаил Васильевича ҫуртӑн пур хутне те тӗпрен юсас тӗлӗшпе пуҫланӑ ӗҫе тӑсма тӗллев лартнине пӗлтерчӗ. Ача-пӑча уйрӑмӗ пушшех юхӑннӑ. «Ҫулталӑкра пӗтӗм поликлиникӑна ҫӗнетме палӑртмӑпӑр, уйрӑмсене черетлесе юсӑр. Ӗҫе пуҫӑнма тивӗҫлӗ документсем хатӗрлӗр», – терӗ республика Пуҫлӑхӗ.

М.Игнатьев районӑн кану ҫуртӗнче канашлу ирттерчӗ. Унта ил тӑрӑхӗсен специалисчӗсем, медицина, вӗренӳ, культура, агропромышленноҫ, предприяти-организаци представителӗсем хутшӑнчӗҫ. Район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Сергей Артамонов социаллӑ пурнӑҫпа экономика аталанӑвӗн 2013 ҫулхи пӗтӗмлетӗвне тишкерчӗ, кӑҫал пурнӑҫлама тӗллевсем лартрӗ. Район бюджетне планран ирттерсе пурнӑҫланӑ. Ҫӗрпӳсем хӑйсем тунӑ тупӑш иртнӗ ҫул виҫӗм ҫулхинчен 31,3% нумайрах. Мӗн пур шайри налук 28% ытларах пухӑннӑ. Ҫанталӑк тухӑҫлӑ ӗҫлеме чӑрмантарнӑ пирки ял хуҫалӑх производстви 2012 ҫулхинчен 8,2% чакнӑ. Сӗт виҫӗм ҫулхинчен сахалрах туса илнӗ. Ӗне вылӑх сахалланнӑ. Кӗтӗве пӗчӗклетме парас мар тесе нумаях пулмасть района 99 пушмак пӑру илсе килнӗ. Мӑйракаллӑ шултра вылӑх йышне 2012 ҫулхи шая ҫитерессишӗн. Ял хуҫалӑхӗнчи уйӑхри ӗҫ укҫи 13392 тенкӗпе танлашать. Ку – республикӑн вӑтам кӑтартӑвӗнчен чылай пысӑкрах. Кашни гектартан тыр-пул туса илес енӗпе район республикӑра пӗрремӗш вырӑнта. Кӗскен: администраци пуҫлӑхӗ пӗлтерӗшлӗ кашни ӳсӗме палӑртрӗ, кӑҫал тумалли ӗҫсем ҫинче чарӑнса тӑчӗ.

Республика Пуҫлӑхӗ вырӑнти хӑй тытӑмлӑх органӗсен ӗҫне тивӗҫлипе хак пачӗ. Районта вилекенсем ҫуралакансенчен ҫав-ҫавах нумайрах. 2010 ҫулта ҫут тӗнчене 483 ача килнӗ, 2012 ҫ. – 474. Пӗлтӗрхи 11 уйӑхра 476-ӑн ҫуралнӑ. Пӗтӗмлетсе каласан – ку енӗпе ӳсӗм ҫук. Темиҫе ҫул юратса пурӑннӑ ҫемьесен пысӑк пайӗ саланать. Ӗҫке ернӗ ҫын нумай.

М.Игнатьев хуҫисем ыйтман пайсене ял тӑрӑхӗсен фондне кӗртес тӗлӗшпе мӗн кирлине пурне те тума, район администрацийӗнчен Ҫӗрпӳри сӗт заводӗнчи лару-тӑрӑва тӗпчесе сӗт туса илекенсем майлӑ йышӑну тума, районӑн социаллӑ пурнӑҫпа инвестици программисене ҫывӑх вӑхӑтрах ҫирӗплетме ыйтрӗ. Пӗтӗмӗшле илсен Ҫӗрпӳ енче ӗҫ-пуҫ лайӑх еннелле улшӑнние палӑртрӗ. «Апла пулин те вырӑнти влаҫӑн пурнӑҫа лайӑхлатассишӗн сулмаклӑрах ӗҫлемелле», – терӗ.

**Юрий МИХАЙЛОВ**



# Укҫа-тенкӗпе тӗллевлӗ усӑ кураҫҫӗ

*Виҫӗм кун республика Пуҫлӑхӗ Михаил Игнатьев Шупашкарти «Строймаш» АХО ӗҫ-хӗлӗпе паллашрӗ.*

Ӑна 2000 ҫулта никӗсленӗ. 108 ҫын вӑй хурать. Кашни уйӑхри вӑтам ӗҫ укҫи 31 пин тенкӗпе танлашать. Пӗлтӗр продукци виҫӗм ҫулхинчен ытларах туса кӑларнӑ. М.Игнатьев рабочисем еплерех вӑй хунипе кӑсӑкланчӗ. «Маплан», «Десма» фирмӑсем ӑсталанӑ прессемпе фторсиликонран, силиконран автомашина-трактор пайӗсем валли япаласем ҫаптарса кӑларнине сӑнарӗ. Вӗсене «КамАЗ», «Гидроавтоматика», «Ярославский моторный завод» обществӑсене, ытти предприятие ӑсатаҫҫӗ.

Производство корпусӗ пысӑк мар. Цехсенче ҫутӑ, хӑтлӑ, ӑшӑ. Ҫынсем хуларан ҫеҫ мар, ялсенчен те ӗҫе вырнаҫма тӑрӑшаҫҫӗ. Мӗншӗн тесен кунта укҫа лайӑх тӳлеҫҫӗ, ӗҫ йывӑр мар.

Нумаях пулмасть администраци ҫурчӗ туса лартнӑ. Республика Пуҫлӑхӗ пӳлӗмсене пӑхса ҫаврӑнчӗ. Предприятипе паллашнӑ хыҫҫӑн АХО ӗҫхӗлне хак пачӗ.

«Эпӗ обществӑна икӗ ҫул каялла килсе курнӑччӗ, – терӗ. – Кунти ырӑ улшӑну мана савӑнтарать. Пӗчӗк тата вӑтам предпринимательлӗхе патшалӑх енчен тӗревлемелли программӑпа килӗшӳллӗн предприятие самаях пулӑшрӑмӑр. Уйӑрнӑ укҫана еплерех ӗҫе кӗртнипе кӑсӑклантӑм. Ӑна тӗллевсӗр тӑкакласа пӗтермен. Вӗр ҫӗнӗ темиҫе пресс туяннӑ, вӗсемпе ӑнӑҫлӑ усӑ кураҫҫӗ. Ӗҫ тухӑҫлӑхӗ пысӑк, продукци пахалӑхӗ лайӑх. Общество директорӗпе калаҫнӑ чух малашне мӗнле ӗҫлесси пирки шухӑшламаллине палӑртрӑм. Коллектив умӗнче пӗр чӑрмав пур: производствӑна ӳстерме электроэнерги ҫитмест. Хула пуҫлӑхӗпе ку ыйтӑва мӗнле татса памаллине сӳтсе яврӑмӑр».

■ **Юрий МИХАЙЛОВ**

*Ҫӗнӗлӗх*

# Европа шайӗнчи павильон



*Чӑннипех, хальлӗхе хулара ун пекки урӑх ҫук-ха. Ку – пӗрремӗш. Тӗрӗссипе – ҫирӗм пӗрремӗш. «Советская Чувашия» хаҫат» акционерсен уҫӑ обществин Шупашкарта шӑпах ҫавӑн чухлӗ суту-илӳ киоскӗ.*

Хула администрацийӗ урамсене килпетсӗрлетекен киоскसенчен хӑтӑлма тӗв тунине тата вӗсене ҫӗннипе улӑштарма сӗннине шута илсе «Советская Чувашия» хаҫат ертӳлӗхӗ тӗслӗх кӑтартма йышӑннӑ, шӗкӗр хуламӑрти Мускав проспектӗнче, республика больници ҫывӑхӗнче Европа стандартне тивӗҫтерекен интернет-павильон хута ячӗ.

«Ҫав териех пысӑк пӗлтерӗшлӗши тепӗр киоск уҫни? Вӗсен шучӗ ахаль те ҫуллахи ҫумӑр хыҫҫӑнхи кӑмпасем пекех ӳсет», – тейӗ тепри. Кӗҫнерни кун ӗҫлеме тытӑнни – ҫавӑн пек шухӑшлакан ҫыннӑн ӑнлавне улӑштараканни. Вӑл – халӑха социаллӑ пӗлтерӗшлӗ пулӑшу кӳрекен комплекс. Кунта – тӳлев терминалӗ, тӳлевсӗр Wi-Fi, ксерокс. Павильонра кофемашина вырнаҫтарнӑ.

Павильона уҫма Чӑваш Республикин информаци политикин тата массӑллӑ коммуникацисен министрӗн ҫумӗ Любовь Шемарина, Шупашкар хула администрацийӗн тата РФ Перекет банкӗн Чӑваш Енри уйрӑмӗн представителӗсем, «Советская Чувашия» хаҫат ӗҫченӗсем хутшӑнчӗҫ. Унӑн генеральнӑй директорӗ – тӗп редакторӗ Владимир Васильев майӗпен ытти 20 киоска та хальхи йышшипе улӑштарассине пӗлтерчӗ.

■ **Юрий СТЕПАНОВ.**

Олег МАЛЬЦЕВ сӑн ӳкерчӗкӗ

*Уяв*

# Таньӑсем – савӑк кӑмӑл парнелекенсем

***Паян – харӑсах икӗ уяв. Татьяна ятлӑ хӗр-хӗрарӑмсем хӑйсен кунне палӑртаҫҫӗ. Аслӑ шкулсенче вӗренекенсем вара Студент кунне уявлаҫҫӗ. Чӑн та, ку праҫника пӗлмен, кӑрлачӑн 25-мӗшӗнче савӑнман студент ҫуках Чӑваш Енре! Эпир те хӑй вӑхӑтӗнче студент пулнӑ. Хӗллехи ҫак сивӗ кун /чылай чухне шартлама пулать ун чухне/ викторина, конкурс, КВН ирттереттӗмӗр. 3-мӗш курсра вӗреннӗ чухне Студент кунӗнче «Экватор» уявне /вӗренӳ тапхӑрӗн ҫуррине парӑнтарни/ хаваслӑн палӑртаттӑмӑр.***




2005 ҫулта кӑрлач уйӑхӗнче Раҫҫей Президенчӗ «Раҫҫей студенчӗсен кунӗ пирки» Указ кӑларнӑ. Унтанпа студентсен уявне палӑртатпӑр. 1755 ҫулта Елизавета Петровна императрица «Мускав университетне уҫасси пирки» Указа алӑ пуснӑ, ҫапла вара Татьяна кунӗ университет кунӗпе пӗр килнӗ. Унтанпа Ҫветтуй Татиана студентсен хӳтӗлевҫи шутланать. Сӑмах май, «Татиана» ят грек чӗлхинчен куҫарсан «йӗркелӳҫӗ, пуҫаруҫӑ» тенине пӗлтерет. Малтанах ку праҫнике Мускав кӑна шавлӑ уявланӑ. Вӑл икӗ пайран тӑнӑ: Мускав университетӗнче студентсене саламланӑ, унтан урамра савӑннӑ. Унта хула ҫыннисем те хаваспах хутшӑннӑ. Анчах ӑна Татьяна кунӗ мар, Мускав университетне никӗсленӗ кун тенӗ.

Ун чухне те, халӗ те студентсем хӑйсен уявне асра юлмалла, хӗпӗртӳллӗ уявлаҫҫӗ. Вӗренӳрен канса илес шанӑҫа ҫухатмастех вӑл! Татьянӑсене вара хӑйне май телейлӗрех те теме пулать. Мӗншӗн тесен кашни ятпах ҫыхӑннӑ уяв ҫук. Татьянӑсем ҫак кун йӗркелекен чиперуксен конкурсне те хутшӑнма пултараҫҫӗ. Вун саккӑрмӗш ӗмӗрте Таня ята дворян ҫемйисенче кӑна хунӑ. Вун тӑххӑрмӗш ӗмӗр пуҫламӑшӗнче вара вӑл хресченсен хушшинче те анлӑ сарӑлнӑ. 20-30 ҫул каялла Таня ят питӗ модӑраччӗ, кашни виҫҫӗмӗш хӗр ача – Татьянӑччӗ. Халӗ вара ӑна кӑмӑллакан йышӗ сахалланчӗ. Апла пулин те пирӗн «Хыпар» Издательство ҫуртӗнче 5 Татьяна! Иккӗшӗ – декрет отпускӗнче. «Кил-ҫурт, хушма хуҫалӑх» редакторӗ Татьяна Ильина, Татьяна Петрова калӑплавҫӑ, Татьяна Тимукова ӗҫ йӗркелӳҫӗ вара хӑйсен тивӗҫне туллин пурнӑҫлаҫҫӗ. Эпир вӗсене Татьяна кунӗпе ӑшшӑн саламлатпӑр, ӗҫре пысӑк ҫитӗнӳсем, ҫирӗп сывлӑх сунатпӑр. Манӑн вара «Хыпар» Издательство ҫуртӗнче 39/!/ ҫул ӗҫлекен Татьяна Ильинан шухӑшне пӗлес килчӗ. Кӑрлачӑн 25-мӗшне уяв кунӗ пек палӑртать-и вӑл? «Пытармастӑп: ятӑм мана питӗ килӗшет. 30 ҫула яхӑн редакцире Таня ятли эпӗ кӑначчӗ. Каярах ҫамрӑксем килме пуҫларӗҫ те – нумайлантӑмӑр. Тӗлӗнмелле те, хамӑр ялта та Таня ятли урӑх ҫукчӗ. Татюк та, Татьян та, Танюша та, Танечка та мар, Таня,– тесе чӗнетчӗҫ мана. Аслӑ шкулта вӗреннӗ чухне вара Михаил Романович Федотов профессор темшӗн-ҫке Таня мар, Таисия тетчӗ мана.

Пиччем Павӑл манран 20 ҫул аслӑрахчӗ. Унӑн салтака кайма ят тухнӑ чухне анне йывӑр ҫын пулнӑ. Ҫитӗннӗ ывӑлӗнчен аван марланнӑран анне садра чиесемпе улмуҫҫисен /вӗсем ун чухне шап-шурӑ пӗркенчӗк айӗнче пулнӑ/ хушшинче ҫӳренӗ. Эпӗ ҫут тӗнчене килсен килтисем пичче патне: «Йӑмӑкна мӗнле ят хурар-ши?»– тесе ыйтса ҫырса янӑ. «Таня!»– пулнӑ хурав. Аппасем урӑхларах ятсем сӗннӗ. Уҫҫихуппи пулманран кашни хӑй кӑмӑлланӑ ята хут татки ҫине ҫырнӑ та калпака янӑ. Пӑлаки те, Пӑраски те, Марье те... пулнӑ-мӗн унта. Туртса кӑлараҫҫӗ те – Таня! Ҫапла майпа мана Таня ятлӑ пулма пӳрнӗ. Апла пулин те кӑрлачӑн 25-мӗшӗнче кӗреке пуҫтарсах, хӑналансах уяв туман. Паллах, пӗлӗшӗмсем шӑнкӑравласа саламлаҫҫӗ, парне те параҫҫӗ. Чунра савӑк, ырӑ ӗнтӗ. Анчах манӑн мӑнукӑмсене те, тӑвансен ачисене те Таня ят хуртарас килмест. Сӑнанӑ тӑрӑх – пурнӑҫ Таньӑсене мӑшӑрсӑр хӑварать. Ачисене те Татьянӑсем пӗччененех ура ҫине тӑратаҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах Таньӑсем черченкӗ, ӑш пиллӗ, вашават, ҫынна пулӑшма яланах хатӗр», – чунне уҫрӗ Татьяна Васильевна.

Ытти Таньӑн мӗнле-ши – пӗлместӗп, анчах пирӗн Татьяна Ильинан паха тепӗр хӑйне еврӗлӗхӗ пур. Вӑл ҫынна савӑнтарма, парне пама маҫтӑр. Ҫын хӗпӗртевӗ унӑн кӑмӑлне ҫӗклет. Апла тӑк – Татьянӑсем ҫӗр ҫине савӑк кӑмӑл парнелекен килнӗ!

■ **Роза ВЛАСОВА**

*Семинар*

# Тăван сăмаха – пурнăç кĕрекине

***Çитес вĕренӳ çулĕнчен шкул программисем çĕнĕ стандартсемпе килĕшӳленмелле. Тăван чĕлхепе литературăна вĕрентессине те пырса тивет федераци ыйтăмĕ. Чăваш Республикин Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерстви, Вĕренӳ институчĕ тата Чăваш наци конгресĕ ирттернĕ «Хальхи вăхăтра чăваш чĕлхине паха шайра тата витĕмлĕ вĕрентесси» семинарăн тĕп ыйтăвĕ – тăван чĕлхепе литературăна вĕрентессине çĕнĕ стандартсемпе шайлаштарасси пулчĕ. Министерство яваплăхĕнчи ыйтăва сӳтсе явма Чăваш наци конгресне явăçтарниех ĕç-пуç çивĕч те кăткăссине пĕлтерет. Семинара çыравçăсене, «Хыпар» Издательство çурчĕн директорне-тĕп редакторне чĕнни те çакнах çирĕплетет.***

Вĕренӳ министерстви çĕнĕ стандартсемпе килĕшӳлентернĕ программăсене тĕрĕслеме тытăннă ĕнтĕ: Шупашкарти 5-мĕш гимназипе 2-мĕш шкул, Тăвай районĕнчи тепĕр шкул ĕçлеççĕ вĕсемпе. Министр çумĕ Светлана Петрова чăваш чĕлхине паха шайра та витĕмлĕ вĕрентес ыйтăва министерство мĕнле курăмра йĕркелессине те пĕлтерчĕ. Çĕнĕ стандартсемпе килĕшӳллĕн – ачасене чĕлхе пĕлĕвĕ парасси çеç мар, вĕсене калаçма хăнăхтарасси тĕп вырăнта. Кайран тин грамматика ыйтăвĕсене хускатмалла. Ют чĕлхесене вĕрентекен технологи-методикăпа анлăн усă курма сĕнет министерство. Урок вăхăтĕнче ачасен тăрăшулăхнепĕлĕвне паллăсем лартса хаклассине пăрахăçлама та хирĕç мар вăл. Енчен те кам хăй ĕçĕнче паллă лартассинчен хăтăлать – çав шкулта инноваци е пилот картине йĕркелеме те, хавхалантару мелĕсене вăйлатма та хатĕр вĕренӳ тӳрелĕхĕ.

Наци конгресĕн ертӳçи Николай Угаслов шухăшĕпе – тăван чĕлхене вĕрентессине паянхи кăткăс лару-тăрура тивĕçлĕ шая partni пурнăçа ахаль пурăнса ирттермен тениех. Конгресс чĕлхе ыйтăвне малашне те асра тытасса, учительсен семинарĕсем йăлана кĕрессе, вĕсен ĕçне республика тулашĕнчи вĕрентекенсене те явăçтарасса шантарчĕ.

Чи туйăмлă сăмах калаканĕ Виталий Станьял пулчĕ. Хăйĕн тишкерĕвĕнче вăл чăваш наци шкулĕ йĕркеленсе каяйманнине, чăвашла вĕрентнин кирлĕлĕхĕ çуккине палăртрĕ. Пурнăçăн аслă çулĕ чăваш тĕнчи айккипе иртсе каять. Лару-тăру вĕренӳ тӳрелĕхне пит пăшăрхантарманнине те систерчĕ Виталий Петрович. Учительсем уроксенче паллă лартас маррипе килĕшменнине те пĕлтерчĕ.

Семинарта тухса калаçнă вĕрентекенсем çĕнĕ стандартсемпе ĕçлеме учительсен ăсталăх шайĕ çителĕклине, пухнă опытпа еплерех усă курассине палăртрĕç. Шупашкарти 59-мĕш шкулта вĕрентекен, учебниксемпе методика кăтартăвĕсен, ĕç тетрачĕсен авторĕ Галина Абрамова 9-мĕш класс хыççăн чăваш чĕлхине вĕрентменни йăнăш пулнине, тӳрелĕх çакна тӳрлетме шав сăмах пани пирки те чарăнса тăчĕ. «Аслă классенче тăван литературăна уйрăм вĕрентмелле мар!» – çак шухăшпа семинара хутшăннисем пурте килĕшрĕç.

Тăван чĕлхе тата чăваш пичечĕн ыйтăвĕсем пирки тухса калаçнă «Хыпар» Издательство çурчĕн директорĕ-тĕп редакторĕ Алексей Леонтьев «Тетте» журнал, «Тантăш» хаçат, «Самант» журнал ачалăхăн уйăх-хĕвелĕ вырăнне пулнине палăртрĕ. «Тăван сăмаха хаклама вĕренмен ача кайран, ӳссе çитĕнсен, чăвашла кĕнеке те, хаçат-журнал та вуламасть», – çакнашкал пĕтĕмлетӳ турĕ республика пичечĕн чăвашла кăларăмĕсен ертӳçи.

Хулари çеç мар, ялти шкулсенче те чăваш чĕлхине вĕрентесси кăткăсланса пырать. Тăван сăмаха пурнăç кĕрекине таварасси учитель ĕçĕ çеç тени – пысăк йăнăш. Малашлăхлă çак ыйтăва йышпа татса памалла.

■ **Владимир СТЕПАНОВ.**

И.КЛОЧКОВ сăн ӳкерчĕкĕсем



• *Шупашкарти 12-мĕш шкул директорĕн çумĕ А.Игнатьева, ЧНК президенчĕ Н.Угаслов, Чăваш халăх писателĕ Юхма Мишши, ЧНК пĕрремĕш вице-президенчĕ В.Клементьев тата «Хыпар» Издательство çурчĕн директорĕ-тĕп редакторĕ, ЧНК вице-президенчĕ А.Леонтьев.*




• *59-мĕш шкулти чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекенĕ Г.Абрамова, ЧППУн кафедра пуçлăхĕ Е.Андреева.*

*Ас тăвăм*

# Çутă сăнарĕ манăçмĕ

***Манăн умра Чăваш халăх писателĕ Лаврентий Таллеров алă пусса парнеленĕ «Хурăн шывĕ», «Юхать юхан шыв», «Сăпка юрри», «Эрхип мăнукĕ Эрхип», «Шавласа çулçă тăкăнать», «Çăлтăр витĕр çул курăнать», «Лаша касанĕ», «Шеремет», «Майра», «Савнă Самиле» повеçсемпе романсен кĕнекисем. Вĕсен хушшинче «Култарам-ха арăмран» ятпа пичетленнĕ калавсен пуххи те пур.***



Чи кивви – 1975 çулта тухнă «Хурăн шывĕ», çĕннисем икĕ пинмĕш çулсен варринче пичетленнĕ «Шеремет», «Майра», «Савнă Самиле» кĕнекесем.

Лаврентий Васильевич хăй Комсомольски районĕнчи Нĕркеçре 1929 çулхи кăрлачăн 27-мĕшĕнче çуралнă. Кăçал вăл 85 çул тултармаллаччĕ.

Пултарулăх пуçламăшĕ унăн Комсомольскинчи «Октябрь ялавĕ» хаçатра тĕвĕленнĕ. Вăл редакцин шалти ĕçĕпе çеç çырлахса ларман, республикăри хаçатсемпе журналсене пĕчĕк калавсем, очерксем, тĕрленчĕксем парса тăма пуçланă. Лаврентий Таллерова Хветĕр Уяр, Митта Ваçлейĕ пек писательсем хăвăрт асăрханă, çыравçăсен хушшине пултарулă çын кĕнине туйса илсе унпа çырусем çӳретме пуçланă, ăна хавхалантарнă, сĕнӳсем панă. Асăрхаттарнисем те пулман мар. Вăл район хаçатĕнче яваплă секретарьте тата тĕп редактортра вун икĕ çул ытла ĕçленĕ. Районсене пысăклатнă хыççăн пĕр вăхăт /1962-64 çулсенче/ Чăваш радион вырăнти корреспондентĕнче хăйне тĕрĕслет. 1969 çул вĕçĕнче, хĕрĕх пĕр çул тултарас умĕн, Шупашкарта тухса тăракан «Коммунизм ялавĕ» /халĕ «Хыпар»/ хаçата куçать. Чим-ха, кун пирки тĕплĕнрех каласа парам.

1969 çулхи хура кĕркунне КПСС Комсомольски райкомĕн секретарĕсем улшăнчĕç. Ыран хаçат тухмалла. Лаврентий Васильевич редакцире çукчĕ. Телефон сасси илтĕнсе кайрĕ. Райкомăн çĕнĕ секретарĕ шăнкăравлать иккен. Хаçатăн хатĕр страницисене пичетлеме пуçличчен вуласа пăхма райкома пырса пама сĕнет. Лаврентий Васильевич тавранчĕ те эпĕ ун патне райкомран мĕн пирки шăнкăравлани çинчен пĕлтерме кĕтĕм. Манăн сăмахсене илтсен редактор пĕрре шуралса, тепре хĕрелсе кайрĕ.

– Пурччĕ пирĕн пин те тăхăр çĕр аллă тăваттăмĕш çулччен цензор текенни те. Унтанпа райкома пичетленмен хаçата йăтса çӳресе курман, çӳрессĕм те çук, – кашни сăмаха татса каласа хучĕ вăл.

Тепĕр кунах Шупашкара командировкăна тухса кайрĕ, икĕ кун пурăнса килчĕ. «Таллеров Шупашкара пурăнма куçать, «Коммунизм ялавĕ» хаçатра ĕçлеме пуçлать» текен хыпар районтра хăвăрт сарăлчĕ. Кĕрхи тĕксĕм кун пурте пĕрле пухăнса ăсатса ятăмăр ăна. Лаврентий Васильевич «Коммунизм ялавĕнче» культура, литературăпа искусство пайĕнче ĕçлеме пуçларĕ. Хĕл ларсан хваттер пачĕç. Вăл мăшăрне Роза Александровнăна, ывăлĕпе хĕрне – Вадимпа Таньăна – хăйпе пĕрле илсе кайрĕ.

Халĕ шухăшлатăп та – райком секретарĕ телефонпа шăнкăравлани Таллеровăн телейне усăнă самант пекех туйăнать. Тата миçе çул райхаçатра ĕçленĕ пулĕччĕши вăл каçхи шăнкăрав пулман тăк? Тен, пенсие кайиччченех. Таланчĕ унăн яланах пысăк пулнă, анчах ăна сарма май килмен. Шупашкара куçсан вара май килчĕ. Пĕр-ик çул хушшинчех тĕрлĕ автор пĕрлешсе кăларакан кĕнекесенче темиçе калав пичетлесе кăларчĕ.

Çулсем иртеççĕ, ватлăх та алăкран шаккать. Чăваш халăх писателĕн Лаврентий Васильевич Таллеровăн ăсталăхĕ кĕнекерен кĕнекене ӳссе пырать. «Шеремет» романĕ уйрăмах ăнăçлă «писĕнсе» тухрĕ. Ара, ахальтен-и ăна ултă çула яхăн çырчĕ. Çырни çеç те мар-çке-ха. Ир те, каç та сăнарсене йĕркелемелле, сюжета пĕр тĕвве çыхмалла. Патшалăх премийĕ илмелли романччĕ вăл. Шел, критиксем те, Писательсен пĕрлĕхĕн ертӳçисем те çакна вăхăтра хаклаймарĕç, пахалаймарĕç. Кĕнеке вара хăвăрт сутăнса пĕтрĕ. Халĕ ăна кĕнеке лавккинче тупаймастăн.

Лаврентий Васильевич пурнăçĕн юлашки кунĕччченех литература ĕçĕнчен пăрăнмарĕ. Йывăр чиртен сипленме пульницана кайсан та хăйĕнпе пĕрле ручка, хут илме манмарĕ. Кăшт самай туйсан маларах çырнă «Эрхип мăнукĕ Эрхип» кĕнекине çĕнĕ тӳрлетӳсем, çĕнĕ ярăмсем кĕртрĕ. Ку повеç тата ытти хайлав «Ырхаяр» кĕнекере пичетленсе тухасса, ăна аллинче тытса курасса ĕмĕтленетчĕ. Шел, çак вăхăта кĕтсе илеймесĕрех леш тĕнчене куçмалла пулса тухрĕ. Пĕр икkĕленмесĕрех паян çапла калатăп: чăваш литератури талантлă прозаика çухатрĕ. «Ыр-хаяр» кĕнеки вара кĕçех кун çути курĕ. Чăваш кĕнеке издательстви ăна пичетлесе кăларма хатĕрлесе çитерĕ.

■ **Геннадий УТКИН,**
**Раççей Писательсен союзĕн членĕ**

**РЕДАКЦИРЕН.**
**Кăрлач уйăхĕн 29-мĕшĕнче Шупашкарти литература музейĕ Чăваш халăх писателĕ Лаврентий Васильевич Таллеров çуралнăранпа 85 çул çитнине халаллань асăну кунĕ йĕркелет. 14 сехетре пуçланать.**



# КРИМ

криминал шырав верс сем приговорсе

2004 çулхи кăрлачăн 17-мĕшĕнче тухма пуçланă

*Айăплав*

## Ун чух виççĕн вилнĕччĕ

***Çĕрпӳ районĕн сучĕ ЧР Çул çӳрев хăрушсăрлăхĕн патшалăх инспекцийĕн 28 çулти сотрудникĕ тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçе тишкерсе пĕтерне. Пакунлă çынна çул-йĕр правилисене пăснă май асăрханмасăр çынсене вилĕм кӳнĕшĕн айăпланă.***

Инкек вара пĕлтĕрхи çурла уйăхĕн 28-мĕшĕнче пулнăччĕ. Служба автомобилĕн рулĕ умĕнче пулнă май ПАИ сотрудникĕ М-7 автотрасса çинче çул-йĕр правилисене сĕмсĕррĕн пăснă – разметкăн шурă йĕрĕ урлă касса умри автомобильтен иртме тăнă. Çавна май Шупашкаралла килекен ВАЗпа çапăннă.

Кăтартăвĕ хăрушă: аварире автоинспекцин çак сотрудникĕ, унăн служба машинин пассажир ларкăчĕ çинчи ĕçтешĕ, çавăн пекех ВАЗ водителĕ вилнĕ. Суд ларăвĕсенче аваришĕн айăплин саккунлă представителĕсен адвокачĕсем пулса иртнине урăхларах сăлтавлама тăрăшнă – служба автомобилĕ юсавсăр пулнипе тӳрре тухма, аварие çавăнпа сăлтавлама тăнă. Анчах малтанхи следстви вăхăтĕнче пухнă материалсем служба машинин рулĕ умĕнче пулнă ПАИ сотрудникĕн айăпне туллин ĕнентерме май панă.

Суд полицейски айăплă тесе йышăннă, анчах вăл вилнине кура ăна уголовлă майпа явап тыттарассине пĕтернĕ. Чăн та, республика прокуратурин пресс-служби пĕлтернĕ тăрăх, суд йышăнăвĕ вăя кĕмен-ха.

## Майсем пулнă – тӳлемен

***Вăрмар районĕн сучĕн Тăвай районĕнчи «Сельхозхими» АУО гендиректорĕ пулнă Решит Галимзянов тĕлĕшпе палăртнă приговорĕ вара вăйра ĕнтĕ. Вăл çынсене ĕç укçи тӳлеменшĕн, укçана тăкакласа пĕтернĕшĕн суд умне тăнă.***

Тĕпчев çирĕплетнĕ тăрăх – Галимзянов предприятин укçа пуррине пĕлсе тăнă çĕртех кунта вăй хуракан 14 çынна икĕ уйăх ытла шалу тӳлемен. Парăмăн пĕтĕмĕшле виçи 250 пин тенкĕрен те иртнĕ.

Ку çеç пулсан юрĕччĕ-ха – апла мар-çке! Гендиректор хăйне кӳрентермен – çакна пушшех каçарма май çук. Служба вырăнĕпе усă курса Галимзянов 177 пин тенке хăйĕн кĕсйине чикнĕ. Çав укçана «Сельхозхими» пурлăхне, çав шутра предприятин ял хуçалăх техникипе тимĕр-бетон блокĕсене сутса тунă. Çавăн пекех предприяти тăпра пулăхлăхне лайăхлатма илнĕ укçа та ертӳçĕ аллине кусна.

Ĕç укçи тӳлеменнине Тăвай районĕн прокуратури тĕрĕслев ирттерсе тăрă шыв çине кăларнă. Тепĕр укçи тӳлеменнине...

Судра Галимзянов айăпне туллин йышăннине кура унăн ĕçне уйрăм йĕркепе тишкернĕ. Суд ăна 4 çуллăха условнăй майпа ирĕклĕхсĕр хăварнă, 110 пин тенкĕлĕх штрафланă. Халĕ унăн пурăнакан вырăна улăштарма юрамасть, уйăхра пĕрре уголовлă айăплава пурнăçлакан инспекцие регистрациленме килмелле.

## Ентешсемшĕн тем тума та хатĕр

***Çав шутра – саккуна пăсма та. Таджикистанра çуралнă, Чăваш Енре пурăннă арçын çакăншăн суд тенкелĕ çине ларнă.***

55 çултискер хăйĕн ентешĕсене пурăнма юрăхсăр пӳлĕмсенче прописка тăратнă. Тепĕр тесен лешсене пурăнма юрăхли кирлĕ те пулман – кунта тĕпленес шухăш тытман вĕт. Прописка вара вĕсене Раççей Федерацине килме кăна мар, пирĕн çĕр-шывра виçĕ уйăх пурăнма май панă. Кайран легализациленме те пулать.

Çак тĕслĕхе Шалти ĕçсен министерствин Çĕмĕрлери пайĕ тĕпченĕ. Унăн дознани уйрăмĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Геннадий Егоров каланă тăрăх – саккунсăр бизнес йĕркелӳçи Çĕмĕрлере чылай çул каяллах тĕпленнĕ. 2005 çултан тытăнса районта йӳнĕпе кивĕ çуртсем туяннă. Таджикистанран килекенсене шăпах çав çуртсенче регистрациленĕ. Документра штамп лартнă хыççăн ют çĕр-шыв çыннисем Раççей тăрăх саланнă – тĕрлĕ çĕрте ĕçленĕ.

Саккунпа палăртнă вăхăт вĕçленеспе вĕсем каллех Чăваш Ене киле-киле кайнă – çакăн хыççăн Раççейре лăпкăнах тата çулталăкла юлма пултарнă. Унтан вара гражданлăх илмешкĕн ыйтса çырма та юрать.

Дознани çирĕплетнĕ тăрăх – 2005-2013 çулсенче çапла майпа 93 мигрант Раççей территорийĕнче саккунсăр пурăнассине йĕркеленĕ. Çĕмĕрле районĕн сучĕ чее арçынна УК 322.1 статйин 1-мĕш пайĕпе айăпласа икĕ çуллăха условнăй майпа ирĕклĕхсĕр хăварнă.

■ **К.АНТОНОВ**

*Кадрсем*

## Прокурор унтаччĕ, халь – кунта...

***РФ Генеральнăй прокурорĕн хушăвĕсемпе республикăри тăватă район прокурорĕсене урăх районсене куçарнă. Ротаци йĕрки пур – вăл тӳрре тухать.***

Сергей Павлова, маларах Вăрмар районĕн прокурорĕ пулнăскере, Муркаш районĕн прокурорĕн должноçне çирĕплетнĕ. Муркаш райпрокуратуринче «хуçа» пулнă Сергей Фирсова вара Çĕмĕрле прокуратурине ертсе пыма шаннă.

Хĕрлĕ Чутай районĕн прокуратурин тилхепи Эдуард Теклев аллинчеччĕ. Халь вăл Элĕк прокуратурине куçнă. Ун вырăнне вара Элĕкрен /кунта прокурор пулнă/ Валерий Шоркина куçарнă.

■ **Н.ДМИТРИЕВ**

*Хăрушсăрлăх*

## Сире камера ӳкерет!

***Кĕçех пӳрт-хваттер чӳречисенчен те тинкерме пуçлаççĕ пуль, тупата... Шӳт-ха ĕнтĕ, анчах видеосăнав мелĕсем вăй илсе, сарăлсах пыраççĕ. Çук, хурлас килмест – çакă хăрушсăрлăха тивĕçтерме кирлĕ.***



Çулсем çинче фотофиксаци приборĕсем вырнаçтараççĕ те – çав вырăнсенче аварисем çукпа пĕрех теççĕ. Анчах влаçсем çакăнпа кăна çырлахасшăн мар. Шупашкар йĕркелĕхе, хула çыннисен хăрушсăрлăхне тивĕçтермешкĕн техника хатĕрĕсемпе усă курас тĕлĕшпе утăм хыççăн утăм тăвать. Çакăн пирки иртнĕ кĕçнерни кун тĕп хулан шалти ĕçсен управленийĕнчи тĕл пулура та тĕплĕ калаçу пулчĕ.

Управлени пуçлăхĕ Сергей Павлов пĕлтернĕ тăрăх – «Хăрушлăхсăр хула» программăпа килĕшӳллĕн вырнаçтарнă камерăсем ĕçлеççĕ, полицие пысăк пулăшу кӳреççĕ. Халĕ ку енĕпе малалла каяссăн – «Хăрушлăхсăр картиш» программăна пурнăçлама тытăннă. Унпа килĕшӳллĕн пурăнмалли нумай хутлă çуртсен картишĕсенче 1,3 пин камера вырнаçтармалла. Ĕçе пуçланă ĕнтĕ – монтаж тăваççĕ. Бюджетран çакăн валли 55 млн тенкĕ уйăраççĕ.

Паллах, çак камерăсене полици пульчĕсемпе çыхăнтармĕç – ытла та нумай-çке. Управлени пуçлăхĕн çумĕ Сергей Копышев çакна та йышăнать: камерăсен ӳкерĕвне кунĕн-çĕрĕн сăнаса ларакансем те пулмĕç, мĕншĕн тесен çапла тумашкăн пысăк йыш кирлĕ пулĕччĕ.

Апла пулин те техника хатĕрĕсем йĕркелĕх хуралçисене ĕçре пысăк пулăшу кӳресси пирки иккĕленмеççĕ. Чи малтанах – преступленисене, йĕркене пăснă тĕслĕхсене уçса парас тĕлĕшпе. Вĕсен ӳкерӳ пахалăхĕ, ытти характеристики çав материалсемпе айăпа ĕнентермешкĕн май парать.

Видеокамерăсен ӳкерĕвĕпе полици ĕçре ăнăçлă усă курнă тĕслĕх вара пайтах. Управлени ертӳçисем преступникесене тупса палăртнă темиçе тĕслĕхе те асăнчĕç. Пĕлтĕр, сăмахран, 36 видеоçырăва следстви органĕсене панă – вĕсем ĕç-пуçа уçăмлатма пулăшнă. Преступление уçса парассине шăпах çавнашкал материал никĕсленĕ, камерăра сăнланса юлнă çынсен сăн ӳкерчĕкĕсем тăрăх айăплисене тупса палăртнă тĕслĕхсем те çук мар. Видеокамерăсен шучĕ нумай хут ӳснĕ хыççăн çакнашкал тĕслĕхсем те пайтах пуласси иккĕлентермест.

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

• ➡ 6, 11, 12 стр.

*Инкек - синкек*

## Сивĕ!

***Çанталăк сивĕтрĕ те – асăрханулăх кирли куç кĕрет. Шел те, шартлама сивве пула республикăра çынсем вилнĕ тĕслĕх пулма та ĕлкĕрчĕ.***

Кăрлачăн 23-мĕшĕнче ирхине Канаш хулинчи Октябрĕн 40 çулĕн урамĕнчи икĕ хваттерлĕ баракăн усă курман пайĕнче икĕ бомж виллисене тупнă – шăнса вилнĕскерсем. Вĕсем камсем пулнине те тӳрех палăртма май килмен, иккĕшĕ те пĕр 50 çулалла.

Арçынсен виллисене хайхи пушă хваттере вĕсем патне килнĕ пĕлĕшĕ тупнă. Вăл каланă тăрăх – çакскерсем эрех час-часах ĕçнĕ. Пĕри хăлхасăрчĕлхесĕр пулнă, тепри те сывă мар – шалкăм çапнă хыççăн аран-аран çӳренĕ.



...Синоптиксем вара çанталăк татах сивĕтессе кĕтмелле теççĕ. Пĕчĕк температура кăрлач вĕçĕнчен тытăнса тăрасси пирки калаççĕ.

■ **К.НИКОЛАЕВ**

КРИМ

*Ҫул ҫинче*

# Аварисем сахалрах пулин те...

***Пӗлтӗр республикӑри ҫулсем ҫинче 2046 авари пулнӑ, вӗсенче 253 ҫын вилнӗ, 2,6 пин ытларах ҫын суранланнӑ. Асӑннӑ цифрӑсем ҫулталӑк маларах пулнӑ кӑтартусенчен пӗчӗкрех. Вилнисен шучӗ пушшех самай пӗчӗкленнӗ – 4,5% чакнӑ. Эппин, ҫулсем ҫинчи йӗркелӗх хуралӗ хӑйӗн ӗҫӗпе кӑмӑллӑ пулма тивӗҫ. Ҫапла, ЧР ШӖМӗн Ҫул ҫӳрев хӑрушсӑрлӑхӗн патшалӑх инспекцийӗн управленийӗн пуҫлӑхӗ Владимир РОМАНОВ та автоинспекци иртнӗ ҫулхи тӗллевсене туллин пурнӑҫланине палӑртать, анчах журналистсемпе курнӑҫса ҫулталӑка пӗтӗмлетнӗ май вӑл пур пӗр ҫивӗч ыйтусенчен пӑрӑнса иртмерӗ.***

### Наркоман та руль умне ларать

Ҫул ҫӳрев хӑрушсӑрлӑхӗн ыйтӑвӗсем тӗлӗшпе республика ертӳҫисем те тимлӗ пулни пысӑк пӗлтерӗшлӗ. Уйччен авӑ тивӗҫлӗ комиссие те вӑл е ку министр ертсе пынӑ, халь тилхепе Иван Моторин премьер аллинче. Ҫакӑ хӑрушсӑрлӑха тивӗҫтермелли ыйтусем валли укҫа уйӑрас ыйтусене татса панӑ чух пушшех курӑмлӑ. Вырӑнсенчи комиссисене те паян район-хула администрацийӗсен пуҫлӑхӗсем хӑйсем ертсе пыраҫҫӗ. Республика Пуҫлӑхӗ пӗлтӗр ҫулсем ҫинчи йӗркелӗхе тивӗҫтерес ыйтусемпе тӑватӑ канашлу ирттернӗ, ҫакӑ нумай ыйтӑва хӑвӑрт татса пама пулӑшнӑ.

В.Романов пӑшӑрханӑвне пытармасть: водитель удостоверенийӗсӗр ҫынсем авари тунӑ тӗслӗхсем хушӑннӑ. Руль умне ӳсӗрле ларнипе пулнӑ инкек сахалрах, анчах эрех ӗҫсе ҫула тухнӑ май вилнӗ водительсен шучӗ пысӑк – 15 ҫын пурнӑҫӗ татӑлнӑ. Ӳсӗрсене тупса палӑртас енӗпе ятарлӑ батальон ҫине тӑрса ӗҫлет, анчах хӗрӗнкӗлле руль умне ларас йӑлана нумайӑшӗ ҫав-ҫавах пӑрахаймасть.

Канаш районӗ ку енӗпе уйрӑмах «уксахлать» иккен. Асӑннӑ батальон пӗлтӗр ҫав районта кӑна ӳсӗр 99 водителе тупса палӑртнӑ. Вырӑнти полици хӑй те ӗҫленӗ вӗт-ха – ӗҫкӗҫсене Канаш полицейскийӗсем хӑйсем те чарнӑ. Ӳсӗр ҫын руль умне ларни мӗнешкел хӑрушлӑх кӳни вара каламасӑрах паллӑ. Ҫамрӑк водительсем ӗҫ-пуҫа кӑткӑслатаҫҫӗ. Сӑмах май, вӗсен ҫарӗ пысӑк – республикӑра ҫуллен 25 пин яшпа кӗр удостоверени илет. Хӑйсем тӗллӗн кӑна, аслисемсӗр, ҫул ҫине тухса инкек тӳснӗ ачасен шучӗ пысӑкланнӑ. Ҫавӑн пекех пӗчӗккисене машинӑра ятарлӑ ларкӑчсемпе усӑ курмасӑр илсе ҫӳренипе вӗсем суранланнӑ тӗслӗх те нумай.

Тепӗр тесен черкке пуштатнӑ хыҫҫӑн ҫеҫ мар, наркотикпе усӑ курсан ҫула тухма хӑюлӑх ҫитерекенсем те пур. Пӗлтӗр йӗркелӗх хуралҫисем ҫавнашкал 56 водителе тытса чарнӑ. Хӑйсем инкеке лекме пултарни – пӗрре, ыттисене мӗнешкел хӑрушлӑх кӳни – тепре... Акӑ мӗншӗн ПАИ пуҫлӑхӗ ӳсӗрсемпе кӗрешес тӗлӗшпе яваплӑха ҫирӗплетни вырӑнлӑ тесе шухӑшлать: тен, уголовлӑ айӑплавпах усӑ курмалла, тен, транспорт хатӗрне конфискацилени пулӑшӗ. Анчах ку унран килмест ӗнтӗ – ҫакна саккун кӑларакансем татса пама тивӗҫ. Штрафсем пур-ха, иртнӗ ҫул ПАИ штрафӗсен пӗтӗмӗшле виҫи 370 млн /!/ танлашнӑ, анчах, куратпӑр, нумайӑшне вӗсем хӑратмаҫҫӗ пулас, асӑннӑ виҫен 73% ҫеҫ шыраса илнине шута илсен – пушшех.

### 25 пин автомобиль хушӑннӑ

Транспорт хатӗрӗсен шучӗ те пысӑк хӑвӑртлӑхпа ӳсет – пӗлтӗр Чӑваш Енре 25 пин единица хушӑннӑ. Предприяти-организаци мар, уйрӑм ҫынсем ытларах «кустӑрмаллӑ урхамах» туянаҫҫӗ. Шел те, ҫул-йӗрпе ҫыхӑннӑ инфратытӑм ҫак ӳсӗме тивӗҫтерейместь. Халӗ те, сӑмахран, тӗп хулара лару-тӑру ҫивӗч, «пӑкӑсем» часчасах пулаҫҫӗ, кану кунӗсенче хуларан тухма е унта кӗме йывӑр. Малашне те ҫаплах пулсан, Владимир Геннадьевич шухӑшӗпе, «хуларан тухма, хулана кӗме те май пулмӗ». Ҫӗнӗ ҫулсем тумалла, пуррисене реконструкцилесе анлӑлатмалла. Хальлӗхе вара...

Пӗр-пӗр ҫӗрте юсав пуҫласан тем тӑршшӗ «пӑкӑсем» йӗркеленеҫҫӗ. Журналистсемшӗн ку пушшех курӑмлӑ: Пичет ҫурчӗн чӳречисем И.Яковлев проспектне тухаҫҫӗ те – унта пӗлтӗр ҫулла-кӗркунне ҫула реконструкциленӗ май водительсем нушаланни куҫ умӗнче пулчӗ. Кӑҫал пӗтӗмӗшле илсен республикӑри ҫулсем ҫинче юсав ӗҫӗсемпе ҫыхӑннӑ ҫавнашкал чӑрмав нумай пулмалла мар: пӗлтӗр анлӑ ӗҫсене ҫулсен теҫеткене яхӑн сыпӑкӗ ҫинче пурнӑҫланӑ, кӑҫал унашкалли пӗрре кӑна пулать-мӗн.

Ҫӗнӗ ҫуртсем ҫӗклеҫҫӗ, анчах парковкӑсем валли вырӑн уйӑрмаҫҫӗ. Унччен объектсене йышӑнакан комиссисенче ПАИ представителӗсем те пулнӑ, халӗ вӗсене унта кӗртмеҫҫӗ, ҫавна май машинӑсене лартмалли вырӑнсем хӗсӗккине тӗллесе кӑтартакан та ҫук пулас.

Аварисен пысӑк пайӗ /61%/ хуласемпе ялсен территорийӗсенче пулнӑ. 39% яхӑн – ҫулсем ҫинче пулнисен тӳпи. Ҫав шутра 15% ытларах – федераци ҫулӗсем ҫинче.



Сӑмах май, шӑпах юлашкисен «сиен йывӑрлӑхӗ» текен кӑтартӑвӗ /ӑна вилнисемпе йывӑр суранланнисен йышне аварисен шучӗ ҫине пайласа палӑртаҫҫӗ/ пысӑк. Ҫаплах-тӑр, федераци ҫулӗсем ҫинче транспорт хатӗрӗсен хӑвӑртлӑхӗ те пысӑк вӗт – машинӑсем ҫапӑнсан ҫын вилесси-аманасси часах.

Мӗнлерех аварисем-ха? Транспорт хатӗрӗ тӳнсе кайнӑ тӗслӗхсем – 11,1%, чӑрмавсем ҫине пырса кӗни – 5,6%, машинӑсем ҫапӑнни – 39,4%. Ҫуран ҫынсене таптанӑ тӗслӗхсен тӳпи те пысӑк – 35,4%. Шӑпах юлашкисем нумаййине кура ҫуран ҫӳрекенсем ҫул урлӑ каҫмалли вырӑнсене кирлӗ пек йӗркелени пысӑк пӗлтерӗшлӗ. Халӗ чылай ҫӗрте ятарлӑ паллӑсене ҫутатса тӑмалла тунӑ, ытти енӗпе ӗҫлеҫҫӗ. Апла пулин те ҫуркуннекӗркунне ҫавнашкал инкексем пур пӗр час-часах пулаҫҫӗ. Каҫ пуласпа хирӗҫ килекен машинӑсен ҫутинче ҫуран ҫынсем курӑнмаҫҫӗ – питӗ сыхӑ пулмалла.

### Васкакан... ҫул айккине сикет

Паллах, нумай инкеке васкани сӑлтавлать. Пӗлтӗр аварисен 26,9% транспорт хатӗрӗсен хӑвӑртлӑхӗ ҫул ҫинчи условисемпе килӗшсе тӑманнипе пулнӑ. Ҫуран ҫынсем хӑйсем те йӗркене уямаҫҫӗ: юраман ҫӗрте ҫул урлӑ каҫаҫҫӗ, транспорт хатӗрӗ, ытти чӑрмав хыҫӗнчен ҫул ҫине тухса тӑраҫҫӗ те – кун пек чух водитель вӗсене вӑхӑтра асӑрхаса ӗлкӗреймест. Ҫавӑнпа та пӗрне хурласа теприне мухтани вырӑнсӑр – кашнин тимлӗ те асӑрханулла пулмалла. Ҫакна статистика та ҫирӗплетет: ҫапла, инкексен пысӑк пайӗ, 87,7%, водительсем ҫул-йӗр правилисене пӑснипе пулнӑ, анчах ҫуран ҫӳрекенсем те ӳксе юлмаҫҫӗ – аварисен 17,6% вӗсем сӑлтавланӑ. Нумай чухне /16,7%/ хушма сӑлтав та тупӑнать – ҫул-йӗр условийӗсем япӑххи: шӑтӑк-путӑк, ҫулсене лайӑх тасатса тӑманни тата ыт. те.

Хӑвӑртлӑх тенӗрен, ӑна виҫекен фотофиксаци хатӗрӗсемпе анлӑ усӑ курнин усси куҫ кӗрет. Вӗсене тӗпрен илсен авари часчасах пулакан вырӑнсенче вырнаҫтарнӑ та – ҫав приборсем ӗҫлеме тытӑннӑ хыҫҫӑн асӑннӑ вырӑнсенче инкексем ҫукпа пӗрех. Халӗ ҫавнашкал приборсен шучӗ республикӑра самай пысӑк – пӗтӗмпе 98. Вӗсенчен 41-шӗ – куҫарса ҫӳремеллисем. Татах та пулӗҫ: 2014 ҫул валли ҫӗнӗ приборсем туянма тата 48 млн тенкӗ уйӑраҫҫӗ.

### Хӗрлӗ «Ауди», ДПС машини...

Журналистсем, паллах, калаҫтаракан уйрӑм тӗслӗхсемпе те кӑсӑкланчӗҫ. Интернетри форумсенче хӗрлӗ «Аудипе» ҫыхӑннӑ ӗҫ-пуҫа сӳтсе яваҫҫӗ. Ҫав машина ДПС автомобильне лектерсе сиенленӗ, вырӑнтан пӑрахса тарма тӑнӑ. Сасхура тӑрӑх – унӑн рулӗ умӗнче тӗп хула мэрӗн Алексей Ладыковӑн 14 ҫулти ывӑлӗ пулнӑ. В.Романов водитель вырӑнӗнче кам пулни ҫинчен татӑклӑн каламарӗ. Пӑтӑрмах, чӑнах та, пулнӑ – раштавӑн 16-мӗшӗнче 21 сехет тӗлнелле Болгарстрой ураменче. Салонри темиҫе ҫынран иккӗшне тытса чарнӑ, ыттисем пӑрахса тарнӑ. Машинӑна хуҫи кӑшт маларах ҫеҫ урӑх ҫынна сутнӑ-мӗн, ҫавна май руль умӗнче шӑпах кам пулни ыйтуллӑ. Руль умӗнче пулнине мэр ывӑлӗ мар, урӑххи йышӑнать-мӗн. Административлӑ тӗрӗслев пуҫарнӑ, ӑна вӗҫлемелли вӑхӑт иртмен-ха, тӗрӗслев ыйтусен хуравне уҫӑмлатма тивӗҫ. Владимир Геннадьевич ӗҫ-пуҫ уҫӑмлансанах ун пирки журналистсене тӗплӗн каласа пама шантарчӗ.

Ҫӗнӗ Шупашкарта ДПС автомобильне вӑрласа кайнӑ тӗслӗх те интереслӗ. Инспекторсем ҫамрӑк ҫынсене тытса чарса полицие илсе килнӗ. Кайран вара вӗсем те тавӑрас тенӗ – территорие карта урлӑ каҫса кӗнӗ те гаражра вӑхӑтлӑха лартса хӑварнӑ машинӑна /уҫҫи салонрах пулнӑ/ вӑрласа кайнӑ. Чӑн та, инҫе каяйман, вӗсене часах тытса чарнӑ.

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

*Коррупци*

# Интернат касси – хамӑн кӗсье пек

***Муркаш районӗнчи Шомикри психоневрологи интерначӗн директорӗ Сергей Вачаев пӗлтӗрхи ҫу уйӑхӗнче учреждени кассине хӑйӗн кӗсйипе арпаштарнӑшӑн суд умне тӑнӑччӗ. Ӗҫ-пуҫ вӗҫленмен иккен, унӑн каллех приговор итлеме тивет-тӗр.***

Следстви комитечӗн Етӗрнери пайӗ интернат экс-директорӗ тӗлӗшпе тата 11 уголовлӑ ӗҫ пуҫарнӑ. Ӑна служба вырӑнӗпе усӑ курса улталанӑ тесе шанмаҫҫӗ.

Следстви шухӑшӗпе – 2010 ҫулхи авӑн уйӑхӗнчен тытӑнса 2012 ҫулхи ҫу уйӑхӗччен Вачаев интернат валли сӗтел-пукан, савӑт-сапа, пациентсем валли тумтир, атӑ-пушмак, ытти япала туянма тесе учреждени кассинчен 950 пин тенкӗ ытла илнӗ. Хӑйне пӑхӑнса тӑракансене ҫав япаласене туяннине ӗнентерекен финанс докуменчӗсем хатӗрлеме хушнӑ, вӗсене хӑй алӑ пусса ҫирӗплетнӗ. Чӑннипе вара интерната кирлине туянман, укҫапа директор хӑй пӗлнӗ пек усӑ курнӑ. Ҫавна май пуҫлӑх хӑй ертсе пыракан учреждение 950 пин ытла тенкӗлӗх сиен кӳнӗ.

СК управленийӗн пресс-служби пӗлтернӗ тӑрӑх – уголовлӑ ӗҫсене халь пӗр производствӑна пӗрлештернӗ, следстви пырать.

Сӑмах май, Вачаев иртнӗ ҫулхи ҫу уйӑхӗнче суд тенкелӗ ҫине мӗнӗшӗн ларнине аса илтерни те вырӑнлӑ-тӑр. Ун чухне те ӑна служба вырӑнӗпе усӑ курса улталанӑшӑн айӑпланӑччӗ. Тата – укҫана уйрӑмах пысӑк виҫепе тӑкакласа пӗтернӗшӗн, службӑри ултавшӑн. Следстви тата суд ҫирӗплетнӗ тӑрӑх – Вачаев интернатӑн администрацийӗ ҫуртне юсанипе ҫыхӑннӑ ӗҫсене йышӑннине ӗнентерекен суя документсене алӑ пуснӑ. Ӗҫсене ҫак учреждение пурӑнакан пациентсен пенсийӗсен ятарлӑ шучӗсем ҫине куҫакан укҫапа «пурнӑҫланӑ». Ҫапла вара психоневрологи интерначӗ 1 млн ытла тенкӗлӗх сиен тӳснӗ. Унсӑр пуҫне 2012 ҫулхи ҫуркунне директор кипкесем, пациентсем валлли тумтирпе атӑ-пушмак туянмаллипе сӑлтавласа учреждени кассинчен 450 пин тенкӗ илнӗ – ҫав укҫана та вӑрланӑ. Вачаева суд 5 ҫуллӑха пӗтӗмӗшле режимлӑ колоние ӑсатма, 500 пин тенкӗлӗх штрафлама йышӑннӑ.

■ **Николай ДМИТРИЕВ**



● ➡ 11, 12 стр.

КРИМ

*Тамаша*

# Зек вăл Африкăра та зек

«Иванч, пире, зексене, нихăçан та ан шанăр», – тенĕччĕ мана, отряд пуçлăхне, Урал леш енче колони-поселенире ĕçленĕ чухне пĕр ристан. Çак сăмахсене кăçалхи çулла Воронеж облаçĕнчи пĕр хуçалăха пырсан аса илтĕм. Унта эпĕ ентешсемпе пĕрле улма-çырла сачĕсенче ĕçлеме кайнăччĕ. Малтанах çĕр кăпкалатрăмăр, унтан тăкăннă пан улми пуçтартăмăр, татрăмăр. Юлашкинчен ултсăмăра хурал тăма суйласа илчĕç.

Сăмах май, кунта ытларах ниçта та ĕçе вырнаçайманнисем пыраççĕ, вĕсен шутĕнче йĕплĕ пралук леш енче «кирпĕч шутланисем» те пур. «Ментсене чăтма пултараймастăп», – терĕ мана Шупашкар каччи Дима Б., алли-урипе ӳкерчĕксемпе эрешленĕскер. Тепри, Йĕпреç тăрăхĕнчен килнĕ Осип П., хулиганла ĕçсем тунăшăн суд тенкелĕ çине ларнă пулнă. Çапах та, хурала суйласа илнĕ чухне ку тĕлĕшпе ятарласа вĕреннĕ, анчах лицензие килте манса хăварнă тесе суйма именсе тăмарĕ. Вăл шăпах çак йĕркесен авторĕ пĕлтĕр хураллан̆ лаптăка лекрĕ. Мана – улма-çырлана турттарса упрамалли вырăна.

Йĕркеллех ĕçлеттĕмĕр, анчах кĕçех усал хыпар çитрĕ: «Осип шăвармалли тимĕр пăрăх татăкне чавса кăларма пикеннĕ. Çакна унта пырса тухнă директор асăрханă. Тепрехинче çакскер хурал пуçлăхĕн хушăвĕсене пурнăçламан, тавлашнă-хирĕçнĕ. Таварса пама шантарса çынран япала е апат-çимĕç илме те вăтанмастчĕ вăл. Улмуççи тавра явăнса ӳснĕ хăмлана та, пан улми те килне илсе тавранма хатĕрлесе хунăччĕ çакскер. Общежитие вырнаçсанах «такама та вырăна лартма пултаратăп» тесе кăкăрне çапрĕ. Çăмăл атлетика енĕпе пĕрремĕш разряд имĕш унăн. Пулĕ те, тепĕр чухне садра çарранах çӳретчĕ.

Виçĕ уйăхран садсем пушанса юлчĕç. Тăван ене таврăнма вăхăт. Тем сăлтава пула-çке Шупашкартан автобус çийĕнчех ярса памарĕç, виçĕ кун кĕтме хушрĕç. «Апла тăк – хамăр тĕллĕн каятпăр!» – çула пуçтарăнчĕç ентешсем. Кантуртисем ирĕксĕрех килĕшрĕç, ахалĕн виçĕ талăк хушшинче «тĕнчене пуç хĕрлĕн çавăрĕç». «Газельпе» çывăхри чукун çул разъездне лесрĕç.

Унта çитсенех куç тĕлне пулнă лавккана сăпса пĕлĕчĕ пек сырса илтĕмĕр. Кашниех пĕрер-икшер кĕленче эрех, çимелли туянчĕ. Кусем нихăçан та эрех ĕçмен, тăраничен çимен теме пулатчĕ çав самантра. Кăнтăрла Воронежран утмăл çухрăмри Лиски хулине çитрĕмĕр. Пирĕн «Новороссийск-Омск» пуйăсран ыран кăнтăрла Канашра анса юлмалла. «Кунта нихăçан та пулман, кăштах çӳресе хулапа паллашар пуль», – сĕнчĕ мана Осип. Ак тамаша, «паллашнă» хушăра пирĕн пуйăс тапранса та кайнă. Пĕтрĕ билет – 1,5 пин тенкĕпе хамăрăн



çемçе вырăна шăлнăнах туйăнчĕ.

Ирĕксĕрех хăна çуртне вырнаçрăмăр. Çĕрле каллех «уçăлса çӳреме» тухрăмăр. Те хамăра сĕм вăрманти пек тыткаланăран, таçти муртан пырса тухнă полицейскисем пире хăйсен пунктне ертсе кайрĕç, паспортсене тĕрĕслерĕç, 100-шер тенкĕлĕх штрафларĕç. Çитменнине, Осип çак лару-тăрура йĕрке хуралçисемпе тавлашса кайрĕ. Самай вăхăтран тин хăна çуртне таврăнма ирĕк пачĕç.

Ирхине вăрантăм та – Осип çук! Манăн куртăкăна тăхăнса кайнă. Ун кĕсйинче виçĕ пин тенкĕччĕ. Юрать-ха, паспорт хампа пĕрлех. Кĕсьесене ухтарса пăхрăм та – пин тенке яхăн çеç юлнă, билет туянма çитмест. Çухалнă ентеше кĕтсе икĕ каç чукун çул вокзалĕнчи пукансем çинче выртса тăтăм. Икĕ хутлă вокзалта халăх кăткă пек хĕвĕшет. Çав хушăра полицейскисем мана темиçе хутчен пырса тĕрĕслерĕç. «Пăрах та хăвар ăна!» – сĕнчĕç вĕсем эпĕ мĕнле сăлтава пула кунта вăрах чарăнса тăнине кура.

Виççĕмĕш кунĕнче полицейскисенчен пĕри саванса пĕлтерчĕ: «Акă вăл!» Вокзалта Осип курăнса кайрĕ. Çи-пуçĕ вараланчăк, пичĕ-куçĕ кăн-кăвак. «Санăн ялпусене сыхлăх камерине хуртарчĕç. Эпĕ сухал ӳстерсе янăран мана чутах Кавказ çынни вырăнне йышăнмарĕç», – ятлаçа-ятлаçа ăнлантартăм «тусăма». «Манăн паспорт ăçта вара?» – кĕсйисене хыпашларĕ Осип. Çук иккен вăл, те çухатнă, те... Билетне, тен, справка кăтартсан та сутĕç тесе касса умне пытăмăр. Мана, паспортлăскере, билет пĕр сăмахсăрах тыттарчĕç, Осип справки çине вара хăрах куçпа та пăхмарĕç.

...«Тен, пуйăсран пуйăса лара-лара Канаша çитĕп», – шанăçне çухатасшăн пулмарĕ Осип манпа сыв пуллашнă май.

■ Александр МОКИН

*Çын тата саккун*

# Çураçу йĕркелĕхе çирĕп тĕревлетĕр

***Республикăра пурăнакансен 32% – чăвашсем мар, ытти халăх çыннисем. Çак лару-тăрура чăвашсемшĕн кăтартуллă çураçулăх пĕлтерĕшĕ пысăк. Ăна «толерантлăх» теççĕ, çак пахалăх пирĕншĕн хайхи ăнлав Раççейре çураличчен чылай маларахах кăтартуллă пулнă. Çапах сисчĕвлентерекен уйрăм самантсем çук теейĕмĕн.***

Вĕсем Интернет аталаннă май вăй илни куç кĕрет. Тĕнчере, çĕршыври пысăк мегаполиссенче палăракан киревсĕр туртăмсем Чăваш Ен ял-хулинчи çамрăксене те витĕм кӳни сисĕнет. Экстремистсен организацийĕсем тĕрлĕ сайт йĕркелеççĕ, хăйсен усал идейисене пропагандăлаççĕ. Çав ушкăнсенчи çынсем вăл е ку наци ыттисенчен аслăрах пулнине çирĕплетеççĕ – фашистсем шăпах çак идеологие тĕпе хунă. Е тата – пĕр-пĕр тĕн конфессийĕ ыттисенчен аслăраххи. Çак шухăшпа авăрланса хăй вăхăтĕнче хĕреслĕ походсем иртнĕ – урăх тĕн çыннисене тĕп тунă.

Экстремистсем тĕрлĕ наци, тĕн, раса çыннисен хушшинче тăшманлăх çуратма ăнтăлаççĕ. Çак тĕллеве пурнăçлама ыттисене хăйсен речĕсене явăçтараççĕ. Çакă – федерацин «Экстремизм ĕç-хĕлĕпе кĕрешесси çинчен» саккунне хирĕçле ĕç. Темле мелпе те усă кураççĕ – национализм идеологине саракан листовкăсем çыпăçтарса çӳренинчен пуçласа хирĕçӳтытăçу йĕркелесси таранах. Шел, хăшĕсем çавнашкал туртăмсен витĕмне лекеççĕ. Иртнĕ çул вĕçĕнче Шупашкарти коопераци техникумĕн студентне экстремизмшăн явап тыттарнăччĕ. Вăл Интернетри социаллă сетьре экстремизм сĕмĕллĕ материалсем вырнаçтарнă. Суд ăна ирĕклĕхсĕр хăварма йышăнчĕ, анчах каччă айăпне йышăнса ӳкĕннине кура условнăй айăплав палăртрĕ. Татах йĕркене пăсрĕ тĕк – ăна колони кĕтет.

Анчах çын хăй йăнăшнине ăнлансан та çĕнĕ пурнăç йĕркелесси чăрмавлă пулма пултарать – экстремистсен ушкăнĕсен ертӳçисем усал кружоксен членĕсем хăйсене пăхăнма пăрахнипе çырлахасшăн мар. Çавăнпа та кашнин ăнланмалла: хăвăн пурнăçна ыттисене инкек кӳмешкĕн халаллани кирлех-и? Унашкаллисен малашлăхĕ – тĕрме-колони.

Экстремизм, терроризм тени Чăваш Енри ялсемшĕн, паллах, кăтартуллă мар. Анчах çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесĕнчи киревсĕр тĕслĕхсем, иртнĕ çул вĕçĕнче Волгоградра пулнă инкексем кунта та сыхлăх кирлине ĕнентереççĕ. Акă мĕншĕн Тăвай районĕнче те çак ĕçе куçран вĕçертместпĕр. Нацисен хушшинчи хутшăнусен çивĕчлĕхĕнчен сыхланасси пушшех пĕлтерĕшлĕ. Массăллă информаци хатĕрĕсенче, çыхăну сечĕсенче экстремизм паллисем пуласран вĕсен мониторингне пурнăçлатпăр. Тĕрлĕ информацие пухассине те тивĕçлĕ шайра йĕркеленĕ. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен нормăла право акчĕсене те ку енĕпе тĕплĕ тишкеретпĕр – саккуна хирĕçлекен самантсене тупса палăртман.

Вĕренӳ учрежденийĕсенче, çамрăксемпе ачасен пĕрлешĕвĕсенче экстремизм материалĕсен шутне кĕртнĕ литература сарăласран сыхланассине те манман, çавăн пекех вĕренӳ учрежденийĕсене тĕн ушкăнĕсемпе сектисене усă курма парасран сыхланас енĕпе те тимлĕ. Шкулсенче Интернетри экстремизм тата терроризм материалĕсемпе усă курас тĕлĕшпе тивĕçлĕ чару пулмалла. 2012 çулта информатика пӳлĕмĕсенче шăпах çак чарăва уяман тĕслĕхсене тупса палăртнăччĕ. Халĕ тивĕçлĕ контент-фильтрсем пур – хăрушлăха сирнĕ.

Миграци службин вырăнти пункчĕн ĕçне те куçран вĕçертмен. Унăн ĕçченĕсен районта миграци саккунĕсене пурнăçланине, ют çĕр-шывсен ĕç вăйĕпе усă курассипе çыхăннă требованисене пăхăннине çирĕп тĕрĕслесе тăмалла. Тĕн организацийĕсен /вĕсем районта 7 – пурте православи чиркĕвĕн прихучĕсем/ уставĕсене те тишкертĕмĕр – пĕтĕмпех саккунпа килĕшуллĕ. Гражданcенчен çăхавсем пулнине кура Иегова свидетелĕсен сектине тĕрĕслеме тиврĕ. Çак сектăн икĕ членĕ çынсене пухăва йыхравланă, листовкăсем сарнă. Чăн та, халăх çав пухăва пуçтарăнман.

Сыхлăхпа çыхăннă ытти ĕç калăпăшĕ те пысăк. Çакă тивĕçлĕ çимĕç кӳрессе, çураçулă чăваш халăхĕ пурăнакан республикăра, районта лару-тăру малашне те лăпкă пулассине никĕслессе шанас килет.

■ Оксана ЯСТРЕБОВА,
Тăвай районĕн прокурорĕ

* * *

Çĕнĕ Шупашкар хулин прокуратури Интернет сетĕнче экстремизм ĕçхĕлĕпе кĕрешесси çинчен калакан саккуна мĕнле пурнăçланине тĕрĕсленĕ май социаллă сетьсен пĕринче нацистсен символикипе атрибутикине пропагандăлакан ӳкерчĕксене тупса палăртнă.

Хайхи сетьпе усă куракан Д.Паньков пулнине тĕпчесе пĕлнĕ. Саккунпа килĕшуллĕн асăннă символикăна, çав шутра Германири национал-социалистсен рабочисен партийĕн ертӳçисен ĕçĕсене саракан, тӳрре кăларакан тĕслĕхсен экстремизм материалĕсен шутланаççĕ. Федерацин совет халăхĕн 1941-1945 çулсенчи Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинчи Çĕнтерĕвне чыслассi-асра тытасси çинчен калакан саккунĕпе килĕшуллĕн нацистсен символикипе усă курма чарнă, ку нумай нацилĕ халăхăн вăрçăри çухатăвĕсен ас тăвăмне хисепленменни пулать. Çавна май экстремизм материалĕсене хатĕрленĕшĕн, упранăшăн, сарнăшăн явапласа палăртнă.

Саккуна уямасăр Паньков Интернетри социаллă сете нацистсен атрибутикине вырнаçтарнă. Хула прокурорĕ ун пирки административлă ĕç пуçарнă. Ăна тишкерсе Çĕнĕ Шупашкар сучĕ саккуна пăснăскере 1 пин тенкĕлĕх штрафланă. Паньков çак йышăнупа килĕшмесĕр çăхав çырнă, анчах ЧР Аслă сучĕ йышăнăва çиплипех хăварнă.

■ Д.АНИСИМОВ

● ➡ 12 стр.

*Усал та намăс!*

# Çĕрпӳкассинче çапла пулнă

***Ку тĕслĕхсенче усалли тата намăсси чăннипех пĕр çыхăра. Шел те, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Çĕрпӳкассинчи преступлени çын вилĕмĕпе çыхăннă.***

46 çулти вăхăтлăх ĕççĕр арçын тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарнă, следователь ыйтнипе ăна хупса хунă ĕнтĕ. Инкек вара асăннă ялта кăрлачăн 17-мĕшĕнче çĕрле пулнă. Çакскер 54 çулти хурăнташ пиччĕшĕ патне кайнă. Пӳрте кĕнĕ те – хайхи пиччĕшĕ, 38 çулти хĕрарăм тата 48-ти тепĕр хурăнташ пиччĕшĕ пĕрле иккен, виççĕшĕ те çарамас! Хайхи хĕрарăмпа çамрăкки унччен хăй пĕрле пурăннă та – çакă тарăхтарса янă пулас. Кĕвĕçнĕскер тăванĕсене те, хăйĕн ĕлĕкхи еркĕнне те тискеррĕн хĕнесе пĕтернĕ. Кил хуçи тухса тарма ĕлкĕрнĕ-ха, тепĕр пиччĕшне вара шăллĕ реанимацие ăсатмаллах тӳпеленĕ. Чи хăрушши – хĕрарăм вилĕмĕ: йывăр сурансене пула вăл тепĕртакран сывлама пăрахнă.

ЧР Аслă сучĕ вара прокуратура апелляцине тĕпе хурса Шупашкарти Мускав районĕн приговорне пăрахăçланă. Вăл тĕп хулара пурăнакан 63 çулти арçын тĕлĕшпе палăртнăскер пулнă. Çулĕсене пăхмасăр ватăскер Интернетра çул çитмен çамрăксене сăнлакан порнографи материалĕсен çаврăнăшĕпе аппаланнă иккен.

Виртуаллă сетьре порнографи туянса хăйĕн компьютерĕнче упранă, унпа сетьре ыттисене те паллашма май панă. Район сучĕ пенсионера тӳрре кăларакан приговор палăртнă – преступлени пулнине ĕнентермелли материалсене саккуна пăсса тупнипе сăлтавланă. Анчах Мускав районĕн прокуратури кунашкал йышăнупа килĕшмен. Аслă суд прокуратура майлă пулнă, ватă çынна тӳрре кăларнă приговора пăрахăçласа уголовлă ĕçе судра çĕнĕрен тишкерме панă.

■ С.АЛЕКСАНДРОВ

КРИМ

*Пулни-иртни*

## Тӳрлетнине ĕненмелле-и?

***Çапла та пулать: кивĕ водитель правине çĕннипе улăштарма пырсан Шупашкар çынни виçĕ çул каяллахи медицина справкипе усă курма тăнă.***

56 çулти водительтен документсем йышăннă май ПАИ инспекторĕ медицина справкинчи цифрăсем тӳрлетнĕ пек курăннине асăрхаса сисчĕвленнĕ. Чи интересли – «3» цифра пур çĕрте те «çĕнелнĕ». 2013 çул тесе вара врачсем патĕнче пулнă, справкăна панă вăхăтсене кăтартнă. Полици сотрудникĕ çак тĕлĕнтермĕш пирки каласан водитель документа хăй тĕллĕн тӳрлетӳсем кĕртнине йышăннă. Çакăн хыççăн ПАИн Б.Хмельницкий урамĕнчи çуртĕнчен тухнă, шăнкăравласан та телефонне тытман.

Дознани вăхăтĕнче çакна палăртнă: çак арçын 2013 çулта мар, 2010 çулта медицина тĕрĕслевĕнче пулнă иккен. Ĕçсĕр автомобилист документсене çул-йĕр инспекцине парассине мĕншĕн тăсса янă – виçĕ çул кĕтнĕ? Хăй дознавателе ăнлантарнă тăрăх – вăхăт пулман-мĕн. Анчах саккун умĕнче явап тытас хăрушлăх тухса тăрсанах вăхăчĕ тупăннă, вăл пĕр кун хушшинчех çĕнĕрен медтĕрĕслев тухнă.

Апла пулин те пĕлсе тăрсах суя документпа усă курни /уголовлă кодексăн 327 статйин 3-мĕш пайĕ/ куç кĕрет, çак тĕслĕхе регистрациленĕ, эппин, арçыннăн суд умне тăма тивĕ.

## Ăна "икс" кăна пĕлет пуль...

***Çапла, хаклă «БМВ-Х5» автомобиле çунтарса янă çынна машина хăй кăна паллать-тĕр. Вăл преступлени тунă вырăнта аллине хурса хăварман.***

2006 çулта туса кăларнă иномарка хуçи пушар пирки темиçе сехетрен тин пĕлнĕ. Çак пăтăрмахчен темиçе кун маларах Шупашкар районĕнче пурăнакан хĕрарăм автомобильпе аварие лекнĕ, «кустăрмаллă урхамахне» юсама тĕп хулари Энгельс урамне илсе кайнă – паллакан механик патне. Пысăках мар мастерской пурăнмалли çуртсенчен инçерех, гаражсен хушшинче, вырнаçнă, çавна май машинăна вут хыпса илнине те çынсем тӳрех асăрхаман.

Полицие хыпар ир еннелле 3 сехет тĕлнелле çитнĕ. Пушар хуралĕн ĕçченĕсем вут-çулăма сӳнтернĕ хыççăн сиен виçине палăртнă. Вăл питĕ пысăк, çавна май автомобиле юсанин-çĕнетнин усси те çук, çĕннине туянни лайăхрах.

МЧСăн Шупашкарти управленийĕн дознани уйрăмĕн дознавателĕ Алексей Трифонов пĕлтернĕ тăрăх – автомобиле такам чĕртсе янă текен версие тӳрех тĕпе хунă. Пушар-техника экспертизи ăна туллин çирĕплетнĕ. Анчах айăпли паллă мар, ăна тупса палăртасси те иккĕленӳллĕ. Телее, хуçи кроссовера инкеклĕ тĕслĕхсенчен КАСКО мелĕпе страхланă иккен. Чăн та, страховщиксем малтан автомобиль аварире сиенленнин виçине çеç саплаштарасшăн пулнă, пушар хыççăн вара нумай хут пысăкрах тӳлев кăларса хума тивет – сиене шар курнисем 600 пин ытла тенкĕлĕх хакланă.

■ **Ольга ПАВЛОВА**

*Асрах...*

## Чеелĕх те, пуçарулăх та

Кукаçин пиччĕшĕн ывăлĕ Василий Михалч колхоз ертӳçи пулнă çулсенче ӳсĕрпе правленири ларăва лашапах, «Аван» ятлă ăйăра утланса, кĕрсе тăнă тесе ахăратчĕç. Вăрçăра пулнăскер кайран та чылай хушă совхоз ертӳçин çумĕнче вăй хучĕ, шӳтлеме питĕ юрататчĕ. Пĕррехинче мана тĕл пулсан хушу пачĕ:

– Эсĕ, йĕркелĕх хуралçи, сарă кӳмелли çине лар та шоссе çинчен пĕр ЗИЛ-130 маркăллине, кранлине, тупса кил хăвăрт, унсăрăн шыв башнине тĕп инженер хăйсен Элменкассине тиеттерсе ярать!..

Асли хушнине турăм, ара яла шыв кĕртмелле! Милици капитанĕн тумне тăхăнса милицин «Уралне» «утлантăм» та Йĕрĕх Çырми – Хуракасси çулĕ çинелле чавтартăм. Чартăм ĕç хыççăн хулана каякан крановщик-шофера, кӳмери «çуттине» унăн кабинине петĕм /сых ятне ăна Ваçça кукка панăччĕ/. Çавăрса Хуракассине тĕп усадьбăна çитрĕмĕр. Михалч кăтартнă башньăна «Колхида» кузовне чиперех хутăмăр. Хамăр Пукаш пуçне те çитертĕмĕр.

Паян та вăл халăхшăн ĕçлет – шывпа тивĕçтерет. Анчах Ваçça кукка пеккисем сахал юлчĕç çав. Çын историе пĕлмест, тăрăшнисене, шел, ас тумасть. Сăмах май, Элменкассисен те башня пур, анчах – лутрараххи кăна, шыв сахалрах кĕрекенни...

■ **А.АНИШОВ.**
Сĕнтĕрвăрри районĕ

## Сăмах çерçи мар

«Ĕнер паркра хĕрсем çĕрĕпе кĕçенсе ларчĕç – чутах чикансем вăрласа кайман».

*Карчăксен калаçăвĕнчен.*

«Варвиттипе чирлĕ вăрра оперативниксем йĕр тăрăх кайса çăмăллăнах тупса палăртнă».

*Полици пуçлăхĕ пĕлтернинчен.*

«Тӳрĕ кăмăллă чиновнике куçран пăхсах пĕлме пулать. Тунсăхлă та выçă куçĕсенчен...»

*Сăнанинчен.*

«Хулара педофилсен ушкăнĕ иртĕхет. Эпир вĕсене тупса палăртмашкăн чи çамрăк корреспондента ăсатрăмăр!»

*Телекурав репортажĕнчен.*

«Ĕнер Н. хваттерне çаратса кайнă. Преступникăн ал тупанĕн йĕрĕ тăрăх экспертсем çакна палăртнă: унăн ĕмĕрĕ вăрăм та телейлĕ пулĕ».

*Эксперт пĕтĕмлетĕвĕнчен.*

«Петров таможенник пĕрре куç хупнăшăнах пин доллар ĕçлесе илет».

*Ĕçтешĕсем каланинчен.*

«Хамас» хăйĕн çине яваплăх илет», «ислам джихачĕ хăйĕн çине яваплăх илет» теççĕ. Пурте яваплă! Гардеробра манăн çĕлĕк çухалнă та – «администраци хăйĕн çине яваплăх илмест» иккен!»

*Арçын каланинчен.*

«Фен-шуй» текеннине Китайри вăрăсем шухăшласа кăларнă – хăйсем вăрра кĕмешкĕн шут тытнă çуртра е хваттерте пӳлĕмсем, сĕтел-пукан мĕнле вырнаçнине малтанах пĕлсе тăма».

*«Дизайн» кĕнекерен.*



## Ха-ха-ха! Ахăлтатса кулар-ха!

**Полици пĕлтерĕвĕнчен:**

**– Ĕнер Президент лимузинне вăрласа кайнă. Уйрăм паллисем: айккинче – икшер мотоциклист, хыçалта – хурал джипĕ.**

* * *

**Çĕрле – улах вырăнта:**

**– Туртмалли çук-и?**

**– Эпĕ – боксер! Виçĕ кун каялла кăна сире хам туртманнине тĕплĕ ăнлантарнăччĕ...**

**– Каçарăр, куçсем шыçса кайнă та, тӳрех паллаймарăм – пуян пулатăр пуль.**

* * *

**– Хваттерте ют çын пуррине мĕнле ăнланса илтĕр?**

**– Çывăх çыннăмсем мана пуçран çатмапа çапмаççĕ...**

* * *

**– Раççей чиновникĕсем чи пуяннисем теççĕ – тĕрĕсех-ши?**

**– Тĕрĕс мар! Чи пуяннисем – вĕсен мăшăрĕсем, ачисем, çывăх ытти çынни.**

* * *

**Бюджет укçине вăрласа çакланнă чиновнике допрос тăваççĕ:**

**– «Мерседес», БМВ, «Кадиллак», «Ягуар» тата ытти автомобиль, виçĕ хваттер, кермен пек коттедж – вĕсене пурне те тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесе тунă укçапа туяннă тесе ĕнентересшĕн-и?**

**– Тата мĕнле укçапа пултăр?**

**– Халăх укçипе!**

**– Мĕн калаçатăр? Халăхăн ун чухлĕ укça ăçтан пултăр?**

* * *

**Суд залĕнче:**

**– Айăпланакан, эсир мĕншĕн çак арçынна тĕллесе пенĕ?**

**– Вăл манăн арăмпа çывăрать.**

**– Вăл сирĕнпе пĕр шухăшлă пулнăшăнах ăна вĕлерме юрать-и вара?**

* * *

**Тĕрмере экскурси йĕркеленĕ.**

**– Ку камерăра ларакан вара – пирĕн мăнаçлăх! – тет тĕрме пуçлăхĕ.**

**– Мĕнпе чапа тухнă?**

**– Пирĕн пата пĕрремĕш хут лекнĕ чухне вăл вулама та, çырма та пĕлместчĕ. Вĕрентрĕмĕр. Халь ав кунта суя документсем хатĕрленĕшĕн лекрĕ.**

* * *

**Депутатсем саккун кăларнă: çынсен хăйсен çывăх çыннисем тунă преступленисем пирки те тивĕçлĕ çĕре пĕлтермелле.**

**Çакăн хыççăн кĕçех пĕр пӳлĕмре телефон янăраса каять:**

**– Але, прокуратура-и?**

**– Ăхă, итлетĕп сире.**

**– Манăн атте вăрланă укçапа «Бентли» туяннă...**

**– Маша, хĕрĕм, эсĕ-и ку?**

**– Атте, эсĕ-им?**

* * *

**Чукчăна допрос тăваççĕ. Вырăсла пĕлмест те – куçаруçа чĕннĕ. Ыйтаççĕ:**

**– Чукча, вăрланă ылтăна ăçта пытартăн?**

**Куçаруçă: Вăрланă ылтăна ăçта пытартăн?**

**Чукча: Каламастăп!**

**Куçаруçă: Вăл каламасть.**

**– Каламасан хăвнах япăх пулĕ – персе пăрахатпăр!**

**Куçаруçă: Чукча, каламасан сана персе вĕлерĕç!**

**Чукча: Юрĕ, калатăп: ылтăна хамăн юрта алăкĕ çумĕнче чавса чикрĕм.**

**Куçаруçă: Пур пĕр каламастăп тет.**

* * *

**Ресторанта сĕтел хушшинче хуйха ӳкнĕ арçын ларать – макăрса ярас пек. Умĕнче – тулли черкке. Тепĕр сĕтел хушшинчи арçын çакна асăрхать те – хайхискерĕн черккине ярса тытать, эрехе ĕçсе ярать.**

**Хуйхăллăскер пушшех кулянать: «Мĕнле пурнăç ку! Хваттере çаратрĕç, дача çунса кайрĕ, ĕçрен кăларса ячĕç, арăм пăрахса кайрĕ... Хамăн çине алă хурас тесе наркăмăш ĕçесшĕнччĕ – ăна та пулин сĕмсĕр çак арçын ĕçсе ячĕ!»**

* * *

**Пĕр арçын Мускав полицине чупса килет:**

**– Мана таджиксем тапăнса çаратрĕç!**

**– Вĕсем таджиксем пулнине ăçтан пĕлетĕр?**

**– Наци тумĕпеччĕ!**

**– Мĕнле наци тумĕ тата?**

**– Кĕрен тĕслĕ, хыçалта «Мосдорстрой» тесе çырнă!**

* * *

**Телекурав пĕлтернинчен: «НАСА специалисчĕсем хăйсем космоса ăсатнă «Феникс» марсоходпа виççĕмĕш эрне çыхăнаймаççĕ ĕнтĕ. Пирĕн специалистсем вара марсохода Дагестанра тупнă – унăн двигатель номерĕсене улăштарма та ĕлкĕрнĕ».**

* * *

**– Кам унта?**

**– Сире – повестка!**

**– Эпĕ çарта пулнă вĕт!**

**– Çар ĕç комиссариачĕн мар, суд повестки!**

* * *

**Полицие ӳсĕр хĕрарăма илсе килнĕ.**

**– Кам эсĕ?**

**– Эпĕ-и? Юр Пике!**

**– Мĕнле Юр Пике? Эсĕ ӳсĕр вĕт, айна янă...**

**– Юр Пике çав – ирĕлетĕп...**

* * *

**Ял арçыннисем кутамкка çакнă та ĕçлеме каймашкăн тухнă. Вăрманпа утнă май вĕсен умне кĕрнеклĕ пĕр хурах тухса тăрать:**

**– Кутамккăрсене хывса мана парăр!**

**Арçынсем хирĕçлеме хăяймаççĕ, кутамккисене параççĕ. Хурах вĕсене илет те йывăççен хушшине кĕрсе кайса çухалать. Кăштахран арçынсенчен пĕри сăмах хушать:**

**– Ушкăн ушкăнах çав. Кутамккасене илчĕ, анчах пире хĕнеме хăяймарĕ!**

* * *

**Пĕр пуян патне хурахсем пырса кĕреççĕ:**

**– Укçу ăçта – кала!**

**– Каласан мана тĕкĕнместĕр-и?**

**– Тивместпĕр!**

**– Тупа тăвăр...**

**– Тупа тăватпăр – тĕкĕнместпĕр!**

**– Укçа – Перекет банкĕнче.**

* * *

**Арăмĕ тĕрмере ларакан упăшки патне килнĕ:**

**– Итле-ха, Ваçук, ачасем ӳсеççĕ – ыйтма пуçларĕç...**

**– «Атте ăçта?» – теççĕ-и?**

**– Çук, эсĕ банкран вăрланă укçана ăçта пытарни пирки ыйтаççĕ?**

**Кăларăма Николай КОНОВАЛОВ хатĕрленĕ.** ● **Çырăр:** Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13, «Хыпар» – КРИМ ● **Шăнкăравлăр:** Тел. /8352/ 56-05-21.

# ЫЙТУ ХУРАВ

## Почта пĕлтерĕшĕ пысăк

**Тĕнчере почта çыхăнăвĕ хăçан йĕркеленнĕ? Мĕнле аталанса пынă?**

**Р.МОИСЕЕВ.**
Комсомольски районĕ.

Çынсем сĕм авалах пĕр-пĕрин патне тĕрлĕ хыпар çитернĕ. Çырулăх йĕркеленсен информацие çырса пĕлтерме пуçланă. Çак самантран почта çыхăнăвĕ йĕркеленнĕ тесен те юрать. Малтанхи тапхăрта вăл вăхăтран вăхăта кăна информацие "валеçнĕ". Чуралăх стройĕ вăй илсен влаç хуçисен çĕр-шыври тата хăйсене пăхăнакан çĕрсенчи лару-тăрăва пĕлсе тăмалла пулнă. Çавна май почта çыхăнăвĕ йĕркене кĕрсе çитнĕ.

Авалхи Грецире, Персире, Египетра, Китайра, Рим империйĕнче почта çыхăнăвĕн ĕçне патшалăх йĕркелесе пынă: çырусене юлан утлă тата çуран çӳрекен ятарлă хыпарçăсем эстафета мелĕпе вырăна çитернĕ. Вăтам ĕмĕрти Европăра мăнастир почтин хыпарçисем мăнастирсене Римри тĕп чиркӳпе çыхăну тытма пулăшнă. Университет почтин çыхăнуçисем вĕренекенсемпе ашшĕ-амăшĕн çырăвĕсене, хыпарĕсене пĕр-пĕрин патне çитернĕ.

Суту-илӳ тата ремесласем аталаннă май хула почтисене никĕсленĕ. Вĕсем улпутсемпе ремесленниксемшĕн ĕçленĕ. Каярахпа почтăпа ахаль çынсем те усă курма пуçланă. Хĕвел анăç Европăра хула почтисемпе Турн тата Таксис нимĕç дворян çурчĕ йĕркеленĕ почта "тупăшнă". Вăл 400 çул ытла "пурăннă". Ăна 1867 çулта Прусси правительстви туяннă. XVI – XVII ĕмĕрсенче Францире, Швецире, Англире, ытти çĕр-шывра почтăна централизациленĕ. Производство хутшăнăвĕсем, капитализм йăл илсен çĕр-шывра, патшалăхсен хушшинче хăвăрт тата çирĕп йĕркепе ĕçлекен почта кирли курăннă.

Почта çыхăнăвĕн историйĕнчи паллă пулăм – марка кăларма пуçлани /1840 çул, Аслă Британи/. 1869 çулта Австрире почта карточкисем тухма тытăннă. 1874 çулта Пĕтĕм тĕнчери почта конгресĕнче 22 çĕр-шыв, çав шутра Раççей те, Пĕрлехи почта килĕшĕвне алă пуснă, Пĕрлехи почта союзне йĕркеленĕ. 1878 çулта корреспонденцисен ылмашăвне йĕркелекен Пĕтĕм тĕнчери почта конвенцине çирĕплетнĕ.

XIX ĕмĕрте пăравуссемпе пăрахутсем çӳреме пуçласан, XX ĕмĕр пуçламăшĕнче самолетсем вĕçме тытăнсан почта ĕçĕ хăвăртланнă. Çав çулсенче почта çыхăнăвĕ патшалăхăн пулса тăнă, мĕн пур халăхăн ыйтăвне тивĕçтерме пуçланă. Телеграф /1832/, телефон /1876/, радио /1895/ шухăшласа кăларсан та почта хăйĕн пĕлтерĕшне – миллион çыннăн хутшăну хатĕрĕ – çухатман. Юлашки çулсенче электроçыхăнăвăн автоматизациленĕ тытăмĕ хăвăрт аталанса пырать, апла пулин те халăх почтăпа ĕлĕкхи пекех анлă усă курать.

Раççейре X ĕмĕртех кнеç хыпарçисем валли халăх кӳмеллĕ лашасем уйăрнă. XIII ĕмĕрте çырусене вырăна çитерекен ятарлă служба йĕркеленĕ. Мускавран тухакан çул хĕррисенче ямшăксен картишĕсене туса лартнă. Унта хыпарçăсем лашисене ылмаштарнă. 1782 çулта Почта департаментне йĕркелесен вĕсене почта станцийĕсем теме пуçланă.

1665 çулта Мускавран Ригăна, 1669 çулта Вильнюса почта маршручĕсем уçнă. Çĕр-шывра чылай хулапа почта урлă çыхăну тытнă. Пысăк хуласенче почтамтсене е почта кантурĕсене никĕсленĕ. 1781 çулта почта урлă



укçа куçарма, çырусене почтальонсем валеçме тытăннă.

XIX ĕмĕр пуçламăшĕ тĕлне Раççейре 460 почта учрежденийĕ шутланнă. 1837 çулта çырусене, ыттине чукун çулпа ăсатма пуçланă. 1843 çулта – Питĕрте, 1845 çулта Мускавра хула почтисене уçнă. 1848 çулта почта ешчĕкĕсене вырнаçтарнă, штемпельлĕ конвертсем кăларма пуçланă. 1865 çулта ял халăхĕ валли земство почтине йĕркеленĕ. Пĕтĕм тĕнчери почта конвенцине йышăннă хыççăн Октябрь революцийĕччен Раççейре ку тытăмра пысăк улшăнусемех пулса иртмен.

Совет правительстви почта çыхăнăвне çĕнетме тата техника тĕлĕшĕнчен пуянлатма тĕллев лартнă. 1917-1921 çулсенче почта ĕç-хĕлне анлăлатнă. Вăл пичет кăларăмĕсене салатма, справка служби вырăнне ĕçлеме т.ыт.те пуçланă.

Пĕрремĕш пилĕк çуллăхра тата 1941-1945 çулсенче çыхăну предприятийĕсен тытăмне уйрăмах вăйлă аталантарнă. Çак тапхăрта авиаци тата автотранспортпа ытларах усă курнă, чылай ĕçе механизациленĕ, автоматизациленĕ. Почта çыхăнăвĕ çав çулсенче СССР халăх хуçалăхĕн пĕр отраслĕ пулса тăнă. Вăл хальхи вăхăтра халăхăн, промышленноçăн, ял хуçалăхĕн нумай ыйтăвне пурнăçлать, çынсене, предприяти-организацие информаципе тивĕçтерет, миллиард экземпляр хаçат-журнал, пенси валеçет, электроэнергишĕн, газшăн, коммуналлă пулăшу ĕçĕсемшĕн тӳлевсем йышăнать тата ытти ĕç-хĕле пурнăçлать.

## Çĕнĕ хваттерсене куçĕç-и?

**Чăваш Енри улталаннă пайçăсене хваттерĕсене тавăрса парĕç-ши?**

**М.КАРПОВ, ĕç ветеранĕ.**
Шупашкар хули.



Улталаннă пайçăсен ыйтăвне икĕ çулта татма палăртнă. ЧР Строительство министерстви пĕлтернĕ тăрăх – хальхи вăхăтра республикăра пая кĕрсе тăвакансен ултă çуртне хута яман.

"Улталаннă пайçăсен" ыйтăвĕ Чăваш Енре 2008 çулта сиксе тухнă. Ун чухне хирĕçлев акцийĕсем те ирттернĕ. Юлашки çулсенче лару-тăру ырă енне улшăнни палăрать. Хальхи вăхăтра "улталаннă пайçăсен" йышĕнче 353 çын. Çитес тапхăрта çак хисеп чакма пултарать. Сăмахран, икĕ çул каялла республикăра 576 "улталаннă пайçă", туса пĕтереймен тăхăр çурт шутланнă.

Пĕлтĕр Шупашкарти Чернышевский урамĕнчи икĕ çурта хута янă. Унта 22 пайçă пурăнма куçнă. Çĕнĕ Шупашкарти Кăнтăр урамĕнчи çуртра 23 çын çĕнĕ хваттер уççисене илнĕ. Шупашкарти Урожайнăй урамра та тепĕр çурт çĕкленсе ларнă. Унта пайра – 12 çын. Эльгер /117 пайçă/ тата Фучик /40 пайçă/ урамĕсенчи объектсенче те хĕрсех ĕçлеççĕ. Вĕсене 2014 çул вĕçне туса пĕтерме палăртаççĕ.

Элкер урамĕнчи çуртсене хута яма çĕнĕ организации 142,8 млн тенкĕ кредит илнĕ. Республика бюджетĕнчен процент тӳлевĕсен тăкакне саплаштарма 5 млн тенкĕ ытла уйăрнă. Çурта тапхăрпа блок-секцисем тăрăх çынсене пурăнма ярасшăн. Фучик урамĕнчи çурта, 55 процента яхăн туса пĕтернĕскере, виçĕм çул раштав уйăхĕнче Ипотека корпорацийĕ туяннă. Строительство ĕçĕсем 2013 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕнче пуçланнă.

Шупашкарти 9-мĕш Пилĕк çуллăх урамĕнчи /улталаннă 78 пайçă/ тата Трактор тăвакансен проспектĕнчи /83 пайçă/ объектсенче лару-тăру уйрăмах йывăр. Малтанхи çурт тăвакан организацисем – панкрут шайĕнче. Çавна май федераци саккунĕпе килĕшӳллĕн туса пĕтереймен объектсене сутма хатĕрленеççĕ, çĕнĕ строительсене шыраççĕ.

## Так-так! Таккать улатакка...

**Улатакка сăмсипе йывăçа сехечĕ-сехечĕпе таккама пултарать. Пуç мимийĕ мĕнле чăтать-ши?**

**Р.ВАСИЛЬЕВА.**
Çĕмĕрле районĕ.



Улатакка пĕр кунта йывăçа 12 пин хутчен сехетре 2000 çухрăма яхăн хăвăртлăхпа таккать. Пиçнĕ чие пысăкăш пуç мимийĕ вĕçĕмсĕр чĕтреве епле чăтать-ха? Мĕнле майпа сывлăхĕ сиенленмест?

Калифорни университетĕнчи Айван Швоб ăсчах улатаккана мĕншĕн пуçĕ ыратса асаплантарманнине пĕлес тĕллевпе кайăкăн пуç шăммине тĕпченĕ. Çавăншăн вăл Шнобель /Нобель премийĕн альтернативи/ премине тивĕçнĕ.

Швоб докторăн ĕçĕ Британири офтальмологи журналĕнче пичетленнĕ. Унта çырнă тăрăх – улатакка хытă япалана çеккунтра 20 хутчен таккать. Çĕр туртăмĕн вăйĕнчен 1,2 пин хут ытларах вăй хурать. Апла пулин те пуç мими чĕтреннипе аптăрамасть, куç сетчатки сийленмест, силленипе пулакан ытти амакпа асапланмасть. Мĕншĕн?

Улатакка организмĕнче чĕтреве лăплантаракан орган вăйлă аталаннă. Вăл кайăка пуçĕ ыратассинчен сыхлать. "Этем ахаль те пуç ыратнипе асапланать. Пуçпа стенана çапса куна ирттерсен унпа мĕн пулĕччĕ-ши?" – çырать Швоба. Çак ĕçшĕн ăсчаха Бостон хулинчи Гарвард университетĕнче чысланă. Вăл орнитологи енĕпе тахçантанпа кĕтнĕ наградăна илнĕ.

Кайăкăн мăй мышцисем те хăйне евĕрлĕ. Улатакка йывăçа tакканă чухне пуçĕ тата сăмси пĕр вăхăтра шайлашуллăн тӳп-тӳрĕ йĕрпе куçаççĕ. Кăшт çеç айккинелле пăрăнса таккани пуç мимине самантрах аркатать. Улатакка пуçĕпе нихăçан та силлемест, енчен енне пăркаламасть. Çакă та пуç мимине вăйлă упрать.

Улатакка хӳрин тĕкĕсем те хăйне евĕрлĕ. Варринчи пĕр е икĕ мăшăр тĕк уйрăмах çирĕп. Вĕсем кайăка йывăçа тakканă чухне тĕрев параççĕ. Апла пулин те хуçăлмаççĕ. Чĕрнесем, мышцăсемпе шăнăрсен тытăмĕ ăна йывăç тăрăх хăпарма, тakканă чухне кĕлеткине организма пĕтĕмĕшле сиенленмелле мар тытса тăма пулăшаççĕ.

## Поэзи фестивалĕ

**Шупашкарта "АВАНТ-АТĂЛ" поэзи фестивалĕ иртессине пĕлтĕм. Мĕнле мероприяти вăл? Унăн тĕллевĕ мĕнре?**

**И.КРАСНОВА.**
Элĕк районĕ.



Раççейри тăхăр хулара нарăсăн 1-9-мĕшĕсенче куçса çӳрекен "АВАНТ-АТĂЛ" поэзи фестивалĕ иртет. Унăн администрацийĕ Санкт-Петербург хулинче вырнаçнă. Кураторĕ – Дарья Суховей поэт тата филолог. Йĕркелӳ комитечĕн йышĕнче – Валерий Земских поэт, Мария Левченко издатель, вулавсене регионсенче ирттерме пулăшакансем.

"АВАНТ-АТĂЛ" фестивале Раççейре 2011 çултанпа ирттереççĕ. Кашни çул урăх хулара йĕркеленĕ. 2013 çулта кашни куна çĕнĕ çĕр-шывра /Раççей, Литва, Латви, Беларуç, Украина/ ирттерме калаçса татăлнă. 5-9 куна тăсăлать. Фестиваль малахри çулсенче кăрлачăн 1-мĕшĕнче пуçланнă. 2014 çулта техника сăлтавĕсене пула нарăса куçнă. Фестиваль маршрутне кĕртнĕ хуласенче кăçал мероприятие хутшăнакан поэтсен сăввисене, унчченхисенче пулнисен хайлавĕсене вулаççĕ.

Фестиваль тĕллевĕ – хальхи вăхăтри поэзие Раççейре сарасси, регионсен хушшинче литература çыхăнăвĕсене йĕркелесси, çĕнĕ ятсем уçасси. АВАНТ-фестивале пĕтĕмлетсе мероприятие хутшăннă поэтсен сăввисен пуххине пичетлесе кăлараççĕ. 2011 çулта – "Снежный ком", 2012 çулта – "На зимних поэздах", 2013 çулта "Череда приземлений" кĕнекесем кун çути курнă. Вĕсемпе isvoe.ru сайтра паллашма пулать.

"АВАНТ-АТĂЛ" фестиваль вулавĕ Шупашкарта нарăсăн 4-мĕшĕнче Наци библиотекинче иртĕ. Регион йĕркелӳçи – Дмитрий Воробьев.

Кăларăма Валентина БАГАДЕРОВА хатĕрленĕ.

Альбина ИСЕМПИ

# Вӑрӑм ҫилхеллӗ Танкист



Хӑватлӑ танкпа кӗмсӗртеттерсе ҫӳрекен ҫын ҫинчен мар сӑмахӑм. Урӑххи пирки-ха. Тупсӑмӗ «Арӑслан кайӑк шыв ӗҫет, ик текерлӗк вӑйӑ вылять» тупмалли юмахра пытаннӑ. Хуравне кам тупрӗ, вӑл ӑнланчӗ-тӗр – мӗнле арӑслан кайӑк ку?

Мӗншӗн ҫавӑн пек ят панӑ-ши ӑна? Сӑмала пек хуп-хураскер, тен, хура комбинезонлӑ танкиста аса илтернӗ?

Тӑпӑл-тӑпӑл кӗлеткеллӗ, вӑрӑм уралла илемлӗ тихана юнашар ялтан конюхра ӗҫленӗ чухне илсе килнӗ Петӗр пичче. Лашасене ахаль те юратаканскер куна, ҫап-ҫамрӑкскерне, пушшех килӗштернӗ вӑл. «Лаша пуласси тихаран паллине» чун-чӗри туйтарнӑ, пурнӑҫ хӑй систернӗ ӑна.

Лаша вити кил хыҫӗнчех те, унта кунне темиҫе хут ҫитсе килмесӗр чунӗ чӑтман Петӗр пиччен. Ҫӳллӗ те сарлака алӑка уҫнӑ-уҫманах вун икӗ урхамах лӑпкӑн кӗҫенсе кӗтсе илнӗ ӑна. Каннӑ е утӑ-улӑм кӑмпӑртаттарнӑ хушӑра та хуҫи кӗнине сиссе ун еннелле ҫавӑрӑнса пуҫӗсене кӑларса тӑнӑ. Унӑн кашни сӑмахне итлесе ура ҫӗклеме, маларах утма е кӑшт чакма хушнине йӑлтах пурнӑҫланӑ. Нихӑшӗ те хӑлхине «вырттарса» харсӑрланман. Ырӑ кӑмӑллӑ конюх вӗсемпе яланах ӑшшӑн калаҫнӑ, нихӑҫан та хӑр-хар кӑшкӑрашман.

«Арӑслан кайӑксем» патне тепӗр чухне вӑхӑтлӑх кӑна кӗнӗ пулин те унта тирпей кӗртмесӗр тухса кайман. Килти вырӑхсене юратнӑ пекех январӗсене те чунран ӑнланнӑ: вӑхӑтра тӑрантарнӑ, шӑварнӑ, уҫӑлма илсе тухнӑ. Ахальтен мар унӑн лашисем тӗреклӗ те вӑйлӑ, хӳхӗм те кӗрнеклӗ пулнӑ.

Лутра кӗлеткеллӗ, хытанкарах хул-ҫурӑмлӑ, ӑшӑ куҫлӑ конюха Танкист хӑварт хӑнӑхнӑ. Хӑйне чӗннине илтсенех хирӗҫ пынӑ. Петӗр пичче ҫумне сӗртӗнсе ачашланнӑ, пуҫӗпе тӗкӗнсе тӑнӑ, ҫӑкӑр татӑкӗ шыраса кӗсйине сӑмсипе кӗрсе кайнӑ. Юлташӗнчен хӑпас килменнипе витене хыҫҫӑнах кӗнӗ, пӗрле тухнӑ.

Темиҫе ҫултан Танкист вӑрӑм ҫилхеллӗ, чӑмӑр кӗлеткеллӗ патвар урхамах пулса тӑнӑ. Лашасене ҫывӑхри валака шӑварма ҫӳрекен ачасен чӗлхисенчен «Танкист» сӑмах кайман. Ун ҫине утланассишӗн тавлашса та илнӗ вӗсем. Юлашкинчен вара черет йӗркеленӗ. Лаша тытма пыраканскем те чи малтан Танкиста шыранӑ.

Килти вырӑх хуҫине пӑхать тенӗн – ӗҫрен хӑраман Танкист. Йывӑр лава тапса туртнӑ, нихӑҫан та кутӑнлашса ҫул айккине пӑрӑнса тӑман. Мӗн тӑвӑн... Турта хушшине хӗсӗнсен туртасах пулать. Чӗрӗ машина тейӗн сарлака кӑкӑрлӑ урхамаха. Кустӑрмасем вырӑнне – вӑйлӑ та ҫирӗп урасем, моторӗ – хӑватлӑ чӗре. Мӗнле лавҫӑ чӑпӑрккапа тивертме хӑюлӑх ҫитертӗр ҫавнашкал чӗр чуна! Пултарнӑ таран пулӑшма, ҫӑмӑллӑх кӳме тӑрӑшнӑ ӑна кашниех.

Уроксем хыҫҫӑн Таньӑпа Ваня ашшӗне пулӑшма кунсерен ҫӳренӗ. Танкист вӗсене тахҫанах хӑнӑхнӑ. Тӑхӑр ҫулти Ваня пурӑнайман унсӑр. Пылакки-тутлине хӑй ҫимесӗр тӑвата уралла тусӗ валли упранӑ. Хӑпартса лартнӑ та ашшӗ ӑна вӑрӑм ҫилхеллӗ урхамах ҫине, лешӗ вара хӑнӑхнӑ йӑлапа картиш тавра хуллен утса ачана ярӑнтарнӑ.

Хӗллехи каникулта ашшӗ-амӑшӗпе пӗрле юнашар яла кукамӑшне курма Танкистпа кайни Таньӑпа Ваньӑшӑн Ҫӗнӗ ҫул умӗнхи чи пӗрремӗш савӑнӑҫ пулса тӑнӑ. Пӗлекен ҫулпа юртнӑ та юртнӑ ҫилхине вӗҫтерсе хура январ. Тилхепене машина таврашӗ ҫывхарнӑ вӑхӑтра ҫеҫ асӑрханса тытмалла. Яла кӗрсен вара кукамӑшӗ пурӑнакан урамалла хӑех пӑрӑнса палланӑ хапха умне пырса чарӑннӑ.

...Ҫулла лашасем улӑхра ешӗл курӑк ҫисе савӑнаҫҫӗ. Ашшӗ ерҫӳллӗ мар чухне ывӑлӗпе хӗрӗ час-часах кӗтӳ пӑхнӑ. Утсене валак патне шӑварма илсе кайса килнӗ, юратнӑ тусне сивӗ шывпа ҫуса уҫӑлтарнӑ.

Лаша кӗтӗвӗпе ялтан чылай инҫе ҫӳренӗ чухне ҫамрӑк кӗтӳҫсем те касу пӑхакан юлташӗсемпе пӗрле выляса савӑннӑ, ҫуйӑхнӑ. Танкист яланах вӗсен ҫывӑхӗнче ҫисе ҫӳренӗ. Пӗррехинче, Ваньӑпа Таня иккӗшех пӗр- пӗринпе шӑкӑлтатса ларнӑ хушӑра, арҫын ачана ҫурӑмран хуллен темскер тӗкнӗ! тутарнӑ. Ҫаврӑнса пӑхнӑ – Танкист! «Мана мӗншӗн чӗнместӗр?» – тейӗччӗ-ши калаҫма пӗлнӗ пулсан.

«Лайӑххипе япӑххи юнашар», теҫҫӗ халӑхра. Вӑрмантан вутӑ турттарнӑ чухне патвар Танкист урине хытӑ мӑкӑлтанӑ. Уксахласа ҫӳреме пуҫланӑ. Вырӑх тухтӑрӗ мӗн пултарнӑ таран сиплесен те суран тӳрленмен...

Лашасем те йӗреҫҫӗ: вӗсене хытӑ кӳрентерсен е ҫав тери йывӑр килсен...

Юратнӑ тусӗн куҫӗ айӗнчи ҫутӑ куҫҫуль тумламне курсан Петӗр пиччен те чунӗ хурланнӑ. Вӑл та куҫҫульне тытса чарайман.

Ҫулне кура Танкиста ашлӑха ӑсатма шутлани уншӑн ҫеҫ мар, ӑна хапӑлланӑ ачасемпе ял-йышшӑн та хурлӑхлӑ хыпар пулнӑ.

Унтанпа чӗрӗк ӗмӗр иртнӗ пулин те: «Манӑн ӑна юратнӑ пек лаша урӑх пулман, тӗлӗкре те Танкиста куратӑп», – тет Петӗр пичче паян кун та.

* * *

«Лаша пур та пурнӑҫ пур, лаша ҫукки – пурнӑҫ ҫукки», – тенӗ ваттисем. Ахальтен мар пур халӑх юрри-юмахӗнче те хитре янӑрать унӑн чапӗпе мухтавӗ.

Мӗн ачаран лашасене юратнӑ, выртмана ҫӳренӗ, ҫӳре туса ӳснӗ Чӑваш халӑх поэчӗ Ухсай Яккӑвӗ «Лаша» поэминче ӑна «юлташӑм», «чӗлхесӗр тус», «чӗлхесӗр чун», «ӗҫчен лаша» тесе хисеплет. Лашана хаклама пӗлмесӗр, чапа кӗртмесӗр «качакаран та йӳнӗрех» шутлакан хӑш-пӗр айвана вирлӗн питлет.

«Телейӗ, пурнӑҫӗ, пӗлетни,
Мӗн пур этемӗн лашара», – тет вӑл. Ҫакна ҫӗр ӗҫченӗсем те ҫирӗплетеҫҫӗ.

# Сӑмах каҫмӑш

Николай КРАСНОВ /Йӗпреҫ районӗ/ хатӗрленӗ



1. Пӗр пуҫӗ шӗвӗр, тепӗр пуҫӗ лапчӑк /туп. юм./. 2. Ҫунатлӑ – вӗҫеймест, ури ҫук – хуса ҫитмелле мар /туп. юм./. 3. Тӑваттӑн тӳп-тӳп, хӑй пӗччен /туп. юм./. 4. Тинӗс варринче качака путекӗ кӑшкӑрать /туп. юм./. 5. Тӑварсӑр ... тутлӑ мар /каларӑш/. 6. Ура салтмасӑр ... урлӑ каҫаймӑн /ват. сӑм./. 7. Йӗтӗрйӗтӗр йӗтӗрпи, йӗтӗр тӑрри шерепи /туп. юм./. 8. Ӑҫта ... – унта сӑрнай /каларӑш/. 9. Йӑпӑлти ... икӗ ӗнене ӗмет /ват. сӑм./. 10. ... ҫиес тесен, пӑри акма ан ӳркен /каларӑш/. 11. ...н пуртти катӑк, атӑҫӑн атти ҫӗтӗк /ват. сӑм./. 12. ... хитре те, хуппи йӳҫӗ /каларӑш/. 13. ...ӗ аслӑ та, кӗлти вӗтӗ /ват. сӑм./. 14. Пӑт-пат тумлӗ, ҫӗре ӳкмӗ /туп. юм./. 15. Кассан турпас кӑна мар, ... та пулать /каларӑш/. 16. Вӑрӑм хӑлхаллӑ – мулкач мар, чӗрнеллӗ – лаша мар /туп. юм./. 17. ... ула кутлӑ /ват. сӑм./. 18. ... ҫын вилсен, ҫанталӑк пӑсӑлать /каларӑш/. 19. ... пулса ҫын пуҫӗ ҫинче таптаса ан ҫӳре; кунӗ пулса хурланса ан ҫӳре /ват. сӑм./. 20. Ултӑ уйӑх пулӑ ҫиет, ҫичӗ уйӑх ҫулҫӑ ҫиет /туп. юм./.

# Гороскоп

**Кӑрлач, 27-нарӑс, 2**



**Сурӑх.** Чуна кӑшлакан вак-тӗвек ыйтусене шута илмесен – ӑнӑҫлӑ эрне. Автомашина ҫӗмӗрӗлес тата килти йӑла техники юрӑхсӑра тухас хӑрушлӑх пур. Ӗҫӗрте йӑлтах йӗркеллӗ мар-и? Ан пӑшӑрханӑр: ку сире туйӑнать ҫеҫ. Канмалли кунсене ҫывӑх ҫыннӑрсемпе ирттерме тӑрӑшӑр – ҫӑлтӑрсем ҫапла сӗнеҫҫӗ.



**Вӑкӑр.** Кӑмӑл пусӑрӑнчӑк-и? Пӗр ӗҫ патне те алӑ пымасть-и? Лару-тӑрӑва тӗпрен улӑштарас килет-и? Тӑраниччен ҫывӑрма, эрнере тумалли ӗҫсене палӑртма, шанчӑклӑ юлташӑрсемпе тӗл пулса пӑшӑрхантаракан ыйтусене сӳтсе явма май килӗ. Унсӑр пуҫне ырӑ хыпар пӗлтерӗҫ. Анчах, шел те, шанса пӑсӑлас хӑрушлӑх пур – эрне кунпа шӑмат кун хулӑн тӑхӑнӑр.



**Йӗкӗреш.** Кӑмӑлӑр лайӑхланӗ. Мӗншӗн тетӗр-и? Юлташӑр умӗнчи парӑма тататӑр, сире ӑмсанакан ӗҫтешӗр отпуска кайӗ, кил-тӗрӗшри кирлӗ мар ӑпӑр-тапӑра кӑларса ывӑтатӑр. Начарланас шухӑшлисем вара диетӑна пӑхӑнма пуҫлӗҫ – ан иккӗленӗр: усси пулатех. Канмалли кунсенче уҫӑ сывлӑшпа киленме май тупӑр.



**Рак.** Ӗҫтешӗрсемпе, тусӑрсемпе ҫыхӑннӑ ыйтусене хыпаланса ан хуравлӑр. Ҫул-йӗр ҫинче асӑрханулла пулӑр: светофорӑн симӗс ҫутине кӗтӗр. Савнийӗре /мӑшӑрӑра/ ан васкатӑр – чунӗнче мӗн капланнине вӑхӑт ҫитсен хӑех уҫса парӗ. Канмалли кунсенче аҫӑр-аннӗре кил-тӗрӗшре пулӑшма тӑрӑшӑр.



**Арӑслан.** Зодиакӑн ҫак паллин тапхӑрӗнче ҫуралнисем тавра курӑма аталантарасшӑн, чиперленесшӗн. Ҫавӑнпах илем салонне ҫул тытӗҫ, психологран сӗнӳ-канаш ыйтӗҫ, стоматолог патне кӗрсе тухӗҫ, пӗр-пӗр курса ҫырӑнӗҫ. Йывӑрлӑха лекнӗ тӑванӑрсене канмалли кунсенче пулӑшма май тупӑр.



**Хӗр.** Эрне пуҫламӑшӗнчех почтӑна тахҫантанпах кӗтнӗ посылкӑна илме каятӑр, каярахпа аякри тӑванӑрсене хыпар пӗлтермешкӗн телеграмма ямалла пулӗ. Эрне вӗҫӗнче кредитпа ҫыхӑннӑ парӑма татма тӑрӑшӑр – кайран укҫа тӑкакламалли сӑлтавсем татах тупӑнӗҫ.



**Тараса.** Кил-тӗрӗшре аппаланса киленӗҫ тупатӑр. Диван-кравате, сӗтел-пукана, йӑла техникине ӑҫта лартасси-куҫарасси пирки ҫывӑх ҫыннӑрсемпе, юлташӑрсемпе канашлатӑр. Ятарлӑ лавккасене ҫитсе ҫӗннисене суйлатӑр. Вырсарни кун вара кил-ҫуртра тирпейлетӗр.



**Скорпион.** Пурте пӗр харӑссӑн: "Сирӗн шухӑшӑр тӗрӗс", – тесен те пуҫа каҫӑртни, кӑкӑр ҫапни вырӑнсӑр. Ӗҫтешӗрсем, ахӑртнех, тӗрӗссине калама шикленеҫҫӗ, ҫывӑх ҫыннӑр хурлантарасшӑн мар, юлташӑрсем вара мӗн пирки сӑмах пынине ӑнкармаҫҫӗ те. Унсӑр пуҫне шӑнман пӑр ҫине ларса юласран асӑрханӑр.



**Ухӑҫӑ.** Вӑхӑта юлташӑрсемпе пӗрле ирттеретӗр: кинотеатра каятӑр, пӗр-пӗр куравпа киленетӗр... Хӑшӗ-пӗри хӑнана ҫул тытӗ е хӑй йыхравлӗ. Тусӑрсенчен вӑл е ку ыйтупа канаш ыйтма тивӗ /чи лайӑх сӗнӗве эрне кун парӗҫ/, вӗсем пулӑшу ыйтсан та – ан хирӗҫлӗр.



**Ту качаки.** Ӗҫре йӑлтах пыл та ҫу. Ҫемьере вара, шел те, лару-тӑру ҫӑмӑл мар. Ачӑрсем ыйтӑвӗсен хуравне тупма пулӑшманшӑн кӑмӑлсӑрланӗҫ, мӑшӑрӑр /савнийӗр/ хӑйӗн сӗнӗвне шута илменшӗн вӗчӗрхенӗ, аҫӑр-аннӗр кил хуҫалӑхра пулӑшманшӑн сӑмахлӗ...



**Шыв тӑкан.** Шыв тӑкансем куравсене, музейсене ҫӳресе тавра курӑма пуянлатӗҫ, юлташӗсемпе ресторана кайӗҫ. Унсӑр пуҫне юратнӑ ҫынни тӗл пулӑва йыхравлӗ. Ҫапах ҫӑлтӑрсем асӑрханулла пулма сӗнеҫҫӗ – пӗлӗшӗр савнине тем пирки евитлес хӑрушлӑх пур.



**Пулӑсем.** Эсир ывӑннӑ, анчах канма май тупаймастӑр – ӗҫ нумай. Хӑвӑра алла илӗр, ан пӑшӑрханӑр. Ҫитес эрнере йӑлтах манса диван ҫинче выртмашкӑн вӑхӑт тупӑнӗ. Халӗ вара пуҫ ҫӗклемесӗр ӗҫлӗр, пуҫӑннӑ проектсене вӗҫлӗр. Пулӑшу кирлӗ тӗк ӗҫтешӗрсене ӳкӗтлӗр.

## ҪАНТАЛӐК

| | кӑнтӑрла | ҫӗрле |
|---|---|---|
| 25.01 | -23 | -27 |
| 26.01 | -25 | -26 |
| 27.01 | -21 | -27 |
| 28.01 | -25 | -28 |
| 29.01 | -28 | -34 |
| 30.01 | -30 | -31 |
| 31.01 | -24 | -26 |

Факс: /8352/ 28-83-70.
E-mail:hypar2008@rambler.ru
реклама пӗлтерӳ
Тел.: 28-83-70.
316-мӗш пӳлӗмре йышӑнаҫҫӗ.

Администрация Батыревского района информирует заинтересованных лиц о приеме заявок от граждан и юридических лиц на предоставление земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения, для сельскохозяйственного производства в аренду сроком на 49 лет с кадастровым номером 21:08:290301:291, площадью 32597 кв. м., местоположением: Чувашская Республика, р-н Батыревский, с/пос. Большечеменевское,

Заявки принимаются в течение месяца по адресу: 429350, Чувашская Республика, Батыревский район, село Батырево, пр. Ленина, д. № 5, каб. № 7. Справки по телефону: 8(83532)61426, 8(83532)6-13-60.

## УСЛУГИ

**13.Бурение колодцев,** скважин, **установка** опор ЛЭП; **к/кольца,** бордюры, **брусчатку.** Д-ка. Т.: 8-965-685-89-75, 89276689696.

**25.Установка забора** из профлиста, сетки-рабицы, секции ворот /распашные, откатные, автоматика/. Гарантия. Тел. 8-917-651-80-57.

**32.Наркология.** Анонимно. Консультация бесплатно. С 8 до13 ч. А.: Чеб., пр. Ленина, 56. **Т. 552733.** Лиц. ЛО 2101000928 МЗ СР РФ от 13.09.13 г. *Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**34.Замена котлов, насосов,** счетчиков, тенов. Т. 8-927-841-71-94.

**51.Бурение** колодцев: скважин; **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

**152.Бурение скважин на воду.** Т. 8-960-302-12-93.

**160.Бурение колодцев,** углубление; **продажа и доставка** ж/б колец. Т. 8-905-343-42-07.

## РАБОТА

**27.Кладовщики, комплектовщики, грузчики.** З/п 34000 руб. Вахта. МО. Прямой работодатель. Т. 8-927-851-20-30.

**28.Водители-экспедиторы.** З/п 40000 руб. Вахта. МО. Прямой работодатель. Тел. 8-927-851-20-30.

**29.Охранники с удостоверением.** З/п 36000 руб. Вахта. Москва. Прямой работодатель. Т. 8-927-851-20-30.

**31.**В Моск. обл. требуются: **упаковщицы, комплектовщики, грузчики.** Граждане РФ, без в/п. ВАХТА. Предоставляется общежитие, оформление по ТК. Тел.: 8-965-445-11-47, 8-965-445-11-48.

## КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**587.Коров, бычков и лошадей.** Т. 89030659909.

## РАЗНОЕ

**67.Ищу женщину,** имеющую детей от Алексеева Олега Владиславовича, для вступления в наследство. Т. 89373767644.

## СУТАТӐП

**39.Пӗтӗ лаша тата тихине** /1,7 уйӑхра/ – Сӗнтӗрвӑрри районӗнче. Т. 8-906-385-65-70.

**795.**Лайӑх кӗрекен **таптарнӑ ҫӑм.** Т. 89170664146.

## ПРОДАЮ

**1.Качественную** фабричную **МЕБЕЛЬ** по доступным ценам: стенки от 7900 р., прихожие от 3600 р., шкафы от 3300 р., комоды от 2300 р., столы от 1000 р., кровати от 4000 р. **Доставка,** сборка. Скидки, рассрочка. Салоны «Express Комфорт»: м-н «Экспресс»; вещ. рынок «Ярмарка»; МТВ-Центр – 4-й эт.; «Северная» ярмарка. **Сайт:** www.excomfort.ru. Т.: 46-55-44, 89538998224.

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Доставка. Замер. Без выходных. Т. 89875766562.

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**8.Гравмассу, песок,** щебень, **торф,** кирп. бой, **керамблок,** керамзит. Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**12.Профнастил,** металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, **трубы** профильные, водостоки, металлосайдинг. Т. 444433.

**15.Кирпич,** брусчатку, кольца, ОПГС, песок, КБ. **Т. 89613393363.**

**16.Сетку-рабицу** от производителя – чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов, **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.

**17.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА, железные двери.** Обшивка вагонкой, пластиком, МДФ. Т. 89050281182.

**19.Гравмассу, песок, щебень,** торф, кирп. бой. Т. 89033225766.

**20.Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Найдёте дешевле – уступим. Без вых. Т. 89625989686.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**22.ОКНА** пластиковые, железные **ДВЕРИ.** Реально низкие цены. Гарантия. Т. 89871267170.

**23.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил, гвозди,** столбы, проволоку. **Изготовление** ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**26.Керамблоки** 20х20х40, 12х20х40, 10х20х40, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, к/кольца. Доставка. Т. 89033468556.

**30.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА, двери** стальные, межкомнатные. Низкие цены. Гарантия качества. Звоните. Тел. 8-937-954-92-45.

**33.Гравмассу,** песок, **керамзит, щебень, торф.** Недорого. Доставка. Т. 89053465671.

**35.Блоки керамзитобетонные** вибропрессованные, пропаренные. Дёшево. **Т. 89373866629.**

**38.ПЛИТЫ тротуарные** 400х400х50 – 420 руб./кв.м., 500х500х60 – 450 руб./кв.м. **Зимой дешевле.** Т. 89674702736.

**42.Керамблоки** 12х20х40, 20х20х40, **кольца** колодезные – диам. 1,5м; 1м; 0,8м; 0,7м; 0,45м. Доставка. **Бурение.** Т.: 8-987-666-41-40, 89370100141.

**43.Натяжные потолки** за 1 день от 350 руб. Т. 89373972442.

**45.АКЦИЯ! БЛОКИ** КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ 20х20х40 – **33** руб., 9х20х40, 12х20х40; **кольца** колодезные всех размеров от производителя, по низким ценам – бурение, монтаж; песок, гравмассу, щебень, торф, навоз, чернозём; КИРПИЧ в ассортименте. Д-ка. Т. 89196543499. Звоните!

**47.Керамблоки** 20х20х40 от производителя. Т.: 48-92-77, 8-903-389-90-38.

**49.Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках. Цены от производителя. Т. 89053447932.

**53.Отруби, зерно, к/корм,** сахар, муку. Доставка. Т. 89373916016.

**56.Мебель корпусную** собственного производства. Т. 684028.

**59.СЕМЕНА кормовой свеклы "ЛАДА"** высокой репродукции. Тел.: 8/8352/ 73-39-11, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**60.Новинки от КЛОПОВ, МУРАВЬЕВ и ТАРАКАНОВ.** Тел.: 8/8352/ 73-39-11, 75-80-34, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**61.БЛОКИ керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое **качество.** Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

**64.Комнаты** в общежитии в г. Чеб-ры, пр. Тракторостроителей, д. 7: **13,4 кв. м** – 750000 руб., **17,3 кв. м** – 850000 руб. Т. 89875754430.

**65.Комнату в г. Чебоксары,** ул. Хузангая, д. 32. Т.: 8-927-853-66-23, 8-937-388-93-23.

**66.Заборы** кованые. Т. 89276689587.

**68.Кирпич, керамблоки** всех видов. Доставка. Т. 8/8352/ 213680.

**69.ДОМ** в деревне Кошки-Куликеево Яльчикского района. Т. 8-937-954-14-55.

**71.ПИЛОМАТЕРИАЛ** любой, **срубы** в наличии и на заказ, **дрова,** горбыль. Т. 8-903-389-14-00.

## *Саламлатпӑр*

***Патӑрьел районӗнчи Аслӑ Арапуҫ ялӗнче пурӑнакан <u>Валентина Степановна ЕНДЕЕВӐНА</u> юбилей ячӗпе сума суса чун-чӗререн саламлатпӑр. Пысӑк ӑнӑҫу, юман пек ҫирӗплӗх, тулли телей сунатпӑр. Хӗвел пек ӑшӑ та ырӑ кӑмӑлупа, йывӑҫ тымарӗ пек тарӑн ӑстӑнупа, юрра-ташша ӑста пулнипе нумай ҫынна хӑвӑн патна туртатӑн эсӗ. Ҫавӑнпах яту-хисепӳ те пысӑк. Малашне те пархатар курма, тумхахсӑр ҫулпа хавшамасӑр утма ырлӑх сунатпӑр сана.***

***<u>Салампа мӑшӑрӗ, ачисемпе мӑнукӗсем, ҫывӑх тӑванӗсем.</u>***



Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды до 49 (сорока девяти) лет из категории "земли сельскохозяйственного назначения" с кадастровым номером 21:17:080901:1417, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, для ведения сельскохозяйственного производства, площадью 232910 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: село Моргауши, улица Мира, дом 6 (1 этаж администрации района), МАУ "МФЦ", с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

Администрация Вурнарского района информирует о наличии свободного земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения, планируемого для предоставления на праве аренды:

сроком на 49 (сорок девять) лет:

- с кадастровым № 21:09:170201:626, площадью 205 702 кв.м, расположенный по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, р-н Вурнарский, с/пос Вурманкасинское, для сельскохозяйственного производства.

Заявки принимаются в течение месяца. Справки по тел. 2-54-44.

Администрация Порецкого сельского поселения Порецкого района Чувашской Республики информирует сельскохозяйственные организации и крестьянско-фермерские хозяйства, обрабатывающие эти участки о возможности приобретения этих земельных участков выделенных в счет невостребованных долей общей площадью 2 646 000 кв.м. с кадастровыми номерами:

21:18:120101:783, площадью 540 000 кв.м.

21:18:120101:781, площадью 2 106 000 кв.м.

Расположенные по адресу: Чувашская Республика, Порецкий район, Порецкое сельское поселение в собственность при выкупной цене такого участка не выше 15% от кадастровой стоимости или в аренду при арендной плате не превышающей 0,3% от ее кадастровой стоимости.

Заявки и предложения принимаются по адресу: 429020, Чувашская Республика, Порецкий район, село Порецкое, улица Ленина, дом 1, тел. 8 (83543) 2-19-74.

**ООО "ЛУКОЙЛ-ВОЛГАНЕФТЕПРОДУКТ"**
**ПРИГЛАШАЕТ ДЕЛАТЬ ОФЕРТЫ О ПРИОБРЕТЕНИИ**
**следующего имущества:**

| | |
|---|---|
| Земельный участок площадью 3896 кв.м с расположенной на нем автозаправочной станцией №162 | ЧР, г. Канаш, ул. Канашская, д.38 |

Имущество принадлежит ООО "ЛУКОЙЛ-Волганефтепродукт" на праве собственности.

Предложения о покупке с указанием цены приобретения принимаются по адресу: г. Нижний Новгород, ул. Грузинская, д.26.

Договор купли-продажи будет заключен с лицом, предложившим наиболее выгодные условия приобретения имущества.

Дополнительную информацию об имуществе и условиях его продажи можно получить с 10 до 17 час. в рабочие дни по адресу: г. Нижний Новгород, ул. Грузинская, д.26, контактные телефоны в г. Н.Новгороде: (831)278-99-43.

Администрация Мишуковского сельского поселения Порецкого района Чувашской Республики информирует о возможности продажи земельной доли, находящейся в общей долевой собственности, 16524 балло-гектаров, муниципального образования Мишуковского сельского поселения Порецкого района Чувашской Республики, в собственность по цене определяемой как произведение 15 процентов кадастровой стоимости одного квадратного метра такого земельного участка и площади, соответствующей размеру этой земельной доли, расположенного по адресу: Чувашская Республика - Чувашия, Порецкий район, Мишуковское сельское поселение, кадастровый номер: 21:18:130101:170.

Заявления принимаются в течение 6 месяцев с даты опубликования по адресу: Чувашская Республика, Порецкий район, село Мишуково, улица Северная, дом 1а.

Администрация Мишуковского сельского поселения Порецкого района Чувашской Республики информирует о возможности продажи земельной доли, находящейся в общей долевой собственности, 6793,2 балло-гектаров, муниципального образования Мишуковского сельского поселения Порецкого района Чувашской Республики, в собственность по цене определяемой как произведение 15 процентов кадастровой стоимости одного квадратного метра такого земельного участка и площади, соответствующей размеру этой земельной доли, расположенного по адресу: Чувашская Республика - Чувашия, Порецкий район, Мишуковское сельское поселение, кадастровый номер: 21:18:130101:170.

Заявления принимаются в течение 6 месяцев с даты опубликования по адресу: Чувашская Республика, Порецкий район, село Мишуково, улица Северная, дом 1а.

Администрация Мишуковского сельского поселения Порецкого района Чувашской Республики информирует о возможности продажи земельной доли, находящейся в общей долевой собственности, 4773,6 балло-гектаров, муниципального образования Мишуковского сельского поселения Порецкого района Чувашской Республики, в собственность по цене определяемой как произведение 15 процентов кадастровой стоимости одного квадратного метра такого земельного участка и площади, соответствующей размеру этой земельной доли, расположенного по адресу: Чувашская Республика - Чувашия, Порецкий район, Мишуковское сельское поселение, кадастровый номер: 21:18:130101:170.

Заявления принимаются в течение 6 месяцев с даты опубликования по адресу: Чувашская Республика, Порецкий район, село Мишуково, улица Северная, дом 1а.

## ПРОДАЮ

**104.СРУБЫ** с комплектацией. Доставка. Т. 8-937-952-84-67, Владимир.

**150. Дымоходные трубы** из нерж. стали. **Аргонная сварка:** медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

**281.ОКНА пластиковые, ДВЕРИ стальные.** Заводское производство. Гарантия 5 лет. Рассрочка. Дёшево. Т. 89276689303.

**842.Срубы для бани.** Т. 372874.

**851.Кирпич, кольца.** Д-ка /вездеход манипулятор/. Т. 444407.

**928.Шерсть овечью** осеннюю, битую. Т. 48-83-57.

Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗн Администрацийӗ Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗн Администрацийӗн Ӗҫсен управленийӗн социаллӑ ыйтусемпе производство тивӗҫтерӗвӗн секторӗн заведующийӗн Дмитрий Петрович Осиповӑн ашшӗ

**Петр Николаевич ОСИПОВ**

вилнӗ пирки чӗререн хурланнине пӗлтерет.

# Уяв саманчĕсем






Журналист – çĕнĕлĕхе кăмăллакан, ялан аталанакан çын. Професси уявне – Пичет кунне уявлассине те çулсеренех çĕнĕлĕх кĕртет вăл. Кăçал, сăмахран, асăннă уява /ăна кăрлачăн 18-мĕшĕнче К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче палăртнăччĕ/ Чăваш наци телекуравĕпе тӳре эфирта кăтартрĕç. Çавна май республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев хаçат-журнал, кĕнеке кăларакансемпе полиграфистсене уяв ячĕпе икĕ хутчен те саламларĕ. Пĕрре – тӳрĕ эфирта, тепре – театр сцени çинче. «Хыпар» Издательство çурчĕн директорĕ Алексей Леонтьев та тӳрĕ эфирта интервью пачĕ.

Эпир, «хыпарçăсем», Пичет кунне уявран та уяв пек йышăнатпăр. Ара вăл шăпах 1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче чăвашсен пĕрремĕш хаçачĕ «Хыпар» тухма пуçланипе çыхăннă-çке! Çĕнĕлĕх тенĕрен... Театр фойинче массăллă информаци хатĕрĕсенче, издательствăсемпе телекоммуникаци предприятийĕсенче вăй хуракансем хăйсен ĕç-хĕлĕпе паллаштаракан курав асра юлчĕ. Çулран çул лайăхланса, аталанса пырать вăл. Хаçат-журнал, радио, телекурав шучĕ ӳсет. Кунтах кăмăл тăвакансене хаçатсен çĕнĕ номерĕсемпе, сăн ӳкерттерсе çийĕнчех пичетленĕ кăларăмсемпе тивĕçтерчĕç. Куравçах 150 ытла çын Олимп çулăмĕпе сăн ӳкерĕнме пултарчĕ. Сăн ӳкерчĕксене тӳрех электрон сайтне вырнаçтарчĕç. Куракансем хаçатсен çĕнĕ номерĕсемпе кăна мар, çĕнĕ кĕнекесемпе те паллашрĕç.

**Роза ВЛАСОВА.**
Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ӳкерчĕкĕсем















чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР



УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, "ХЫПАР" ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ

Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ

“Хыпар” индексĕ – 54800, “Хыпар”-шăмат кун”– 78353, “Çамрăксен хаçачĕ” – 54804, “Чăваш хĕрарăмĕ” – 11515, “Сывлăх” – 11524, “Кил-çурт, хушма хуçалăх” – 54806

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ

Номер редакторĕ Г.А.МАКСИМОВ

РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ /директор-тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь-техника центрĕн пуçлăхĕ/

Дежурнăй редактор Н.Г.СМИРНОВА

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, “ХЫПАР”.

ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор-тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ,
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ, hypar2008@rambler.ru
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай
/8-835-38/2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ

Факс: (8352) 28-83-70
Электрон почта: hypar@mail.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем “Реклама çинчен” федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн “Аталану çулĕпе”, “Ят-сум”, “Ĕç тата çын”, “Самана таппи”, “Компетентлă” рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.

Тираж 8843. Заказ 231.

Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.